22-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус

1942 МАРТ 31 ЫТЛАРИКУН 75(6100) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ТĂВАНЛА РЕСПУБЛИКĂСЕН ĂМĂРТĂВĔНЧЕ МАЛА ТУХАССИШĔН

Кăçалхи мартăн 28—29-мĕшсенче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ўстермелли мерăсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ тунă доклада, 1941 ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе кăçалхи çураки вăхăтĕнчи задачăсем çинчен ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Сомов юлташ тунă доклада сўтсе-яврĕ.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ўстерес тĕлĕшпе кăçал пирĕн ялхуçалăхĕ умĕнче питех те пысăк задачăсем тăнине шута илсе, канашлу тăванла Мари тата Мордва республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухма йышăнса хăй çине конкретлă обязательствăсем илчĕ. Çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме республикăри колхозниксене, трактористсемпе комбайнерсене, ялхуçалăх специалисчĕсене пурне те чĕнсе каларĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн республика иртнĕ çулта чылай пысăк çитĕнўсем турĕ. Колхозсенчи мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 21,1 процент, сыснасен хисепĕ 34,2 процент тата сурăхсемпе качакасен хисепĕ 28 процент чухлĕ ўсрĕ. Анчах пирĕн тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармалла мар. Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă пирĕн умма пысăк задачăсем кăларса тăратать. Пирĕн çĕршывпа Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем валли ытларах та ытларах аш-какай, сĕт-çу тата тумтирсем парса тăрас пулать. Çак задачăна вара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмасăр пурнăçа кĕртме çук. Çавăнпа та СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ўстермелли мерăсем çинчен» çак кунсенче ятарласа постановлени йышăнчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пирĕн колхозсен кăçал нумай вăй хурса ĕçлемелле пулать. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрас пулать, кашни çамрăк выльăха хамăрăн выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ўстерес ĕçе ярас пулать. Выльăхсене пусса пĕтерес йăлана хирĕç татăклăн кĕрешни кирлĕ. Кăçал пирĕн колхозсен контрактаци йĕркипе колхозниксенчен, рабочисемпе служащисенчен вуншар пин пăрусемпе путексем сутăн илмелле. Выльăхсене чуптарас тата искусственнăй майпа пĕтĕлентерес ĕçе анлăн организацилесе пырас пулать. Кунсăр пусне тата выльăх апачĕн базине çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хумалла.

Çаксене асра тытса, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ пысăк ĕçсем тума палăртса хăварчĕ. Мари тата Мордва АСС Республикисемпе ăмăртса ĕçлесе, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсен, ялхуçалăх специалисчĕсен республикăра 1942 çулта лашасен хисепне 12 процент, ĕнесен хисепне 32,7 процент, сыснасен хисепне 29,8 процент, сурăхсен хисепне 76 процент ўстерессишĕн, кашни ĕнерен вăтамран 1.100 литр сĕт суса илессишĕн, кашни сурăхран 2,3 килограмм çăм касса илессишĕн, кашни 100 ĕнерен 85 пăру, кашни 100 сурăхран 110 путек, кашни 100 кĕсререн 60 тиха, пĕр сысна аминчен 11 çăвăр, кашни чăхран 70 çăмарта илессишĕн, выльăхсен ăратне лайăхлатассишĕн тата ыттишĕн те кĕрешмелле. Çакăн пек задача лартать пирĕн умма малта пыракансен канашлăвĕ, çакăн пек задача лартаççĕ партипе правительство.

Тырпул тухăçлăхне ўстерес енĕпе те пĕчĕк мар задачăсем тăраççĕ. Иртнĕ çулта пирĕн колхозсем ку енĕпе те чылай çитĕнўсем турĕç. Гектартан 100-шер пăт тырă туса илнĕ колхозсен хисепĕ çулран çулах ўссе пырать. Партипе правительство тырпул тухăçлăхне ўстернĕшĕн хушса тўлемелле туни колхозниксен ĕçри хастарлăхне вăйлăн ўстерчĕ. Анчах кăçал пирĕн татах та лайăхрах ĕçлес пулать. Пирĕн çĕршыв çине ултавлăн тапанса, тăшман Совет Союзĕн хăшпĕр облаçĕсене вăхăтлăха йышăнса илчĕ. Çак çухатăва пирĕн хамăрăн акăнакан çĕрĕн лаптăкне ўстерни витĕр хурас пулать.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ ку тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума палăртса хăварчĕ. Пирĕн колхозсенчи уйхирсенче кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 13,2 центнер тĕштырă, 105 центнер çĕрулми, 3,4 центнер йĕтĕн сўсĕ, 15 центнер махорка, 10 центнер кок-сагыз тата ытти те туса илмелле. Машинăсемпе тата тракторсемпе туллин усă курас пулать. Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа сахалтан та 340 гектар ĕçлемелле. Тырпулсене 20—25 кунра вырса пĕтермелле тата ытти те. Çакăн пек обязательствăсем илчĕ пирĕн республика тăванла республикăсемпе ăмăртăва тухса. Çак обязательствăсене пирĕн мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртесех пулать.

Мари тата Мордва АССР-сене ăмăртăва чĕнсе илнĕ обязательствăсем пирĕн çине пысăк ответлăх хураççĕ. Пирĕн ăмăртура малти вырăна йышăнассишĕн кĕрешме колхозниксен пĕтĕм массине мобилизацилес пулать. Çавăнпа та районпа район, колхозпа колхоз, колхозникпе колхозник хушшинче социализмлă ăмăртăва чăннипех те анлăн сарса ярас пулать. Кашни район тата колхоз хăйĕн планĕсене иртерсе тултарса пытăр, кашни колхозник нормăна икшер, виçшер хут тултарса ĕçлетĕр. Çапла тусан çеç эпир хамăрăн обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлама пултаратпăр.

Районсенчи партипе совет организацисем умне çакна мăй пысăк ĕç тухса тăрать. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине тата Мордва, Мари АССР-семпе ăмăртăва тухса Чăваш АССР илнĕ обязательствăсене çак çитес кунсенчех кашни колхозра, кашни бригадăра сўтсе-явассине организацилемелле, çак обязательствăсене пурнăçа кĕртмелли мероприятисене палăртса хăвармалла.

Юлташсем — колхозниксем, колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем агрономсемпе зоотехниксем! Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса иртерессишĕн социализмлă ăмăртăва тухăр, тăванла республикăсен ăмăртăвĕнче малти вырăна йышăнассишĕн кĕрешĕр!

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарьне АНДРЕЕВ юлташа

Хаклă Андрей Андреевич!

Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансем, килес ялхуçалăх çулĕн ыйтăвĕсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусене сўтсе-явма республикăри канашлăва пухăннăскерсем, Сире, халăхсен çулпуçĕн Сталин юлташăн чи çывăх соратникне, большевикла хĕрўллĕ салам яраççĕ.

Пирĕн çĕршыв халĕ тискер гитлеризма хирĕç, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн тăшманне хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн йывăр кунĕсене пурăнса иртерет. Совет Союзĕнчи нумай миллионлă халăха чуралăха кĕртсе ўкерес тата нимĕçлетес тесе, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне туртса илес тесе, Германин вăрă-хурахла империализмĕ хăйĕн юнлă аллине çĕклерĕ. Германи фашизмĕ пирĕн колхозлă пурнăçа, эпир царизма тата чотçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе çĕнсе илнĕ колхозлă строя таптаса тăкасшăн. Гитлеровецсем пире, колхозниксемпе колхозницăсене, нимĕç улпучĕсен правăсăр чурисем туса хурасшăн. Çук, çавăн пек тума эпир никама та ирĕк памăпăр!

Аслă çулпуç Сталин юлташ чĕннипе пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне хўтĕлеме çĕкленчĕ. Совет Союзĕ нимĕç империалисчĕсене çĕр çинчен яланлăхах шăлса ывăтма хатĕр тăракан пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. Пирĕн вăхăтри генилле полководец Сталин юлташ ертсе пыракан Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапать, çĕршер хуласемпе ялсене нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнчен хăтарса ирĕке кăларать.

Анчах эпир лайăх ăнланатпăр: тăшмана çĕмĕрсе тăкман-ха,—унтан та ытларах,—ăна пĕтерсе тăкман-ха. Тăшман вăйлă-ха. Ăнăçусем тăвас тесе вăл юлашки вăйĕсене пухма тăрăшĕ. Вăл мĕн чухлĕ пысăкрах поражениесем тўсĕ, çавăн чухлĕ тискерленсе пырĕ. Çавăнпа та Хĕрлĕ Çара пулăшассине пирĕн вăйлатас пулать, фронт валли, тăшмана татăклăнах çĕнтерес ĕç валли ывăнма пĕлмесĕр ĕçлес пулать.

Сталин юлташ пире Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата ытти продуктсем, промышленность валли чĕртавар парса тăма чĕнчĕ.

Эпир Сире, хаклă Андрей Андреевич, Чăваш республикинчи колхозлă хресченсен ячĕпе çакна шантарсах калатпăр: Сталин юлташ лартнă задачăна эпир чыслăн пурнăçа кĕртĕпĕр. Тăванла республикăсемпе социализмлă ăмăртăва тухса, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата ытти продуктсем парса тăрас тесе, эпир ывăнма пĕлмесĕр тата хамăрăн вăйсене шеллемесĕр ĕçлĕпĕр, асса кайнă нимĕç оккупанчĕсене татăклăнах çĕмĕрсе тăкассине сехете çывхартас тесе, вăрçă вăхăтĕнчи пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешĕпĕр.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Çĕнтерў пирĕн алăра пулать!

Сывă пултăр аслă çулпуç, генилле полководец Сталин юлташ!

1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен государство планне лайăхрах пурнăçлас тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Мордва тата Мари АССР-семпе социализмлă ăмăртăва тухса Чăваш АССР илнĕ

ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

«...Пирĕн пĕррремĕш тĕллев — хамăрăн территорисемпе хамăрăн халăхсене нимĕçсен фашистла пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси, пулса тăрать... Анчах çакна тума пирĕн çарпа пирĕн флота хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыни кирлĕ; пирĕн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хĕрарăмсем, предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронт валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыв валли чĕртавар ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организациленсе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ».

(И. СТАЛИН).

Большевиксен партийĕ, совет правительстви тата Сталин юлташ хăй куллен пулăшса пынипе Чăваш АСС Республикинчи колхозсем 1941 çулта, нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсем пулнă пулин те, колхозсене организаципе хуçалăх енчен малалла тĕреклетсе пырас, тырпул тухăçлăхне ўстерес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Пирĕн республикăри колхозсем гектартан 13 центнер ытларах тырпул туса илчĕç, колхозсенчи мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 21,1 процент, сыснасен хисепĕ 34,8 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 28 процент ўсрĕ. Иртнĕ çулта сысна фермисем 236, сурăх фермисем 65 çĕнĕрен организациленĕ. Анчах та тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармалла мар. Кашни колхозникпе колхозницăн, МТС-семпе совхозсенчи мĕнпур работниксен, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур специалистсен Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешĕве çĕнĕ çĕкленўпе сарса ярас пулать.

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин совхозĕсенчи, машинно-тракторнăй станцийĕсенчи рабочисем, колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçлăхĕнчи специалистсем, хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла бандисене хирĕç кĕрешсе отечественнăй аслă вăрçăн нумай участокĕсенче тунă çĕнтерўсемпе хавхаланнăскерсем, 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен планне тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлă тултарассишĕн, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокчен тултарассишĕн кĕрешме Мари тата Мордва АСС Республикисене социализмлă ăмăртăва чĕнсе, хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илеççĕ:

1. Кашни гектартан вăтам шутпа

Тĕштырă	13,2 ц.	туса	илмелле	
Çĕрулми	105	»	»	»
Йĕтĕн сўсĕ	3,4	»	»	»
Кантăр сўсĕ	4,1	»	»	»
Махорка	15	»	»	»
Кок-сагызăн чĕрĕ тымарĕ	10	»	»	»
Выльăх кăшманĕсем	250	»	»	»
Люцернăпа клевер вăррисем	1,6	»	»	»
Помидор, хăяр тата кишĕр	150	»	»	»
Сухан	110	»	»	»
Купăста	250	»	»	»
Улма-çырласем	30	»	»	»

2. Машинно-тракторнăй паркпа усă курас ĕçре çакăн пек çитĕнўсем тумалла:

а) çемçе çĕре сухаланипе шутласа (авăн çапнине кĕртмесĕр) кашни тракторпа пур ĕçсен планне те обязательно тултарса çакăн чухлĕ ĕç тумалла:

Газогенераторлă СТЗ-НАТИ тракторпа	645 гектар
Карбюраторлă СТЗ-НАТИ тракторпа	850 »
Урапаллă СТЗ-ХТЗ тракторпа	355 »
ЧТЗ тракторпа	970 »
У-2 тракторпа	200 »

3. Ĕç тухăçлăхне ўстерсе пырса, трактор паркĕпе кирлĕ пек усă курса, планпа пăхнинчен чакармалла:

а) çунтармалли япаласене тăкаклассине 5 процент

б) ĕçĕн хăйне ларакан хакне 5 процент

4. Комбайнсене, молотилкăсене тата тырпулсене пуçтарса кĕртмелли ытти машинăсене июлĕн 1-мĕш тĕлне юсаса пĕтермелле.

5. 1942 çулта вăйлă тырпул туса илес задачăна пурнăçа кĕртес майпа сахалтан та çакăн пек агротехникăллă ĕçсем туса ирттермелле:

а) уйхире тислĕк кăлармалла 1.800.000 тонна

вăл шутран хĕллехи тата çуркуннехи вăхăтсенче 1.200.000 »

б) çĕре çемçетме торф хатĕрмелле 800.000 »

в) кĕл пухмалла 80.000 центнер

г) пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши ир пулакан культурăсене 8—10 кун хушшинче акса пĕтермелле;

д) кок-сагыза çуракин малтанхи кунĕсенче, ир пулакан çуртырри‌сене акма пуçлаччен акса пĕтермелле.

е) пур сеялкăсемпе те туллин усă курмалла.

6. Махоркăна 10—12 кун хушшинче лартса пĕтермелле.

7. Яровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăвармалла:

а) тĕштырăсем 100.000 гектар

б) çĕрулми 8.000 »

8. Кĕрхи тырăсем акнă çĕре 3—4 кун хушшинче 60.000 гектар сўрелемелле.

9. 1942 çулта пахча-çимĕç лартса ўстермелли тата парниксем хывса хăвармалли плана кашни колхозрах тултармалла:

а) парниксем хывса хăвармалла 22.000 рама

б) вăл шутран çĕнĕрен 2.750 »

в) махорка калчисем ўстерме парниксем хывса хăвармалла 18.000 »

г) теплицăсем тумалла 1.200 квадратлă метр

10. Çакăн чухлĕ йывăççем лартса хăвармалла:

а) садсем 850 гектар

б) çырла-йывăççисем 150 »

в) колхозсенче çырла йывăççисен питомникĕсене лартса хăвармалла 32 »

11. Кĕрхи тата çурхи тырпулсене 42.500 гектар çинче апат памалла.

12. Мĕнпур шыв тытмалли вырăнсене йĕркене кĕртмелле, 300 гектар чухлĕ шывра пулă ĕрчетмелле.

13. Хура çĕртме тумалли плана пĕтĕмпех июнĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр тултармалла.

14. Утă пухас ĕçе 7 кун хушшинче пĕтĕмпех тата лайăх пахалăхпа, тырпул пухас ĕç пуçланаччен вĕçлемелле.

15. Тырă вырма тухиччен çаксене юсамалла тата çĕнĕрен тумалла:

а) МТС комбайнĕсем çапнă тырра типĕтмелли вырăнсем пур колхозсенче те тумалла;

б) витнĕ итемсем 1500 штука тумалла.

16. Тырпулсене çак сроксенче вырса пĕтермелле:

а) кĕртыррисене 8—10 кунра

б) çуртыррисене 12—15 кунра

17. Тырă вырма тухнă хыççăн 5 кунран кая юлмасăр тырăсене капана хывма тытăнмалла, тырă вырса пĕтернĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр хывса пĕтермелле.

18. Тырă вырма тухнă хыççăн 3—5 кунран авăн çапма тытăнмалла, ноябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр çапса пĕтермелле.

Курăк вăррисене вĕсене вырма тухнă хыççăн 20 кунран кая юлмасăр çапса пĕтермелле.

19. Техникăллă культурăсене çак сроксенчен кая юлмасăр пуçтарса кĕртмелле:

а) йĕтĕн татассине 5—6 кунра

б) кантăр пусине татассине 8 »

в) кантăр хутассине октябрĕн 10-мĕш тĕлне

г) йĕтĕне сарса пултарассине сентябрĕн 1-мĕш тĕлне

д) махоркăна пуçтарса кĕртессине сентябрĕн 10-мĕш тĕлне.

20. Кĕртыррисене пысăк пахалăхпа, агротехникăллă лайăх вăхăтра тата августăн 27-мĕшĕнчен кая юлмасăр акса хăвармалла.

21. Государствăна тырă, техникăллă культурăсем, пахча-çимĕçсем, çĕрулми, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тăратмалли обязательствăсене тата натуроплатăна пур колхозсенче те срокчен тултармалла.

22. Октябрĕн 10-мĕшчен 250.000 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кĕрхи çĕртме тумалла.

23. Çураки вăхăтĕнче кашни ĕçлекен лашапа, çемçе çĕре сухаланине шутласа, 7 гектартан кая мар ĕçлемелле.

24. Кашни трактор бригадинче, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенчи стансенче пĕрер вагон-будка пулмалла, пĕтĕмпе 290 будка пулмалла.

25. Ялхуçалăх ĕçĕсем вăхăтĕнче пур колхозсемпе совхозсенче те ача яслисем, площадкисем, сачĕсем организацилемелле, вĕсем валли пултарулла руководительсем, культурăпа йăла япалисем тата апат-çимĕç памалла.

26. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне кашни колхозрах тултармалла, обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепне республикăра çакăн чухлĕ ўстермелле:

а) лашасен хисепне	12 процент		
б) мăйракаллă шултра выльăхсен хисепне	41,1	»	»
в) вăл шутран ĕнесен хисепне	32,7	»	»
г) сыснасен хисепне	29,8	»	»
д) сурăхсен хисепне	76	»	»

е) кролик амисен хисепне 5000 çитермелле;

ж) ўсе çитнĕ кайăк-кĕшĕксен хисепне 300.000 çитермелле;

з) хурт-хăмăр çемьисен хисепне 50.000 çитермелле;

27. Çулталăк хушшинче вăтамран:

а) кашни ĕнерен 1.100 литр сĕт суса илмелле;

б) кашни сурăхран 2,3 килограмм çăм касса илмелле:

28. Кашни 100 ĕнепе тына-пăруран 85 пăру илсе пăхса çитĕнтермелле;

кашни çĕр сурăхпа сурăх-путекрен	110 путек
кашни 100 кĕсререн	60 тиха
пĕр сысна аминчен	11 çурă

пĕр кролик аминчен 12 çурă илсе пăхса çитĕнтермелле.

Çăмарта тăвакан кашни чăхран 70 çăмартаран кая мар илмелле.

Государствăна аш-какай пама кашни колхозник килĕнче вуннăран кая мар чĕпсем ўстермелле.

29. Выльăхсен ăратне лайăхлатас тĕлĕшпе çакăн чухлĕ метизаци тумалла:

а) мăйракаллă шултра выльăхсем 27.000 пуç

б) кĕсресем 19.230 »

в) сурăхсем 42.000 »

30. Лайăх производительсемпе искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе хăвармалла:

а) кĕсресем 5.000 пуç.

б) ĕнесем 16.000 »

в) сурăхсем 60.000 »

31. Пĕрлештернĕ выльăхсем валли тата колхозниксен выльăх-чĕрлĕхĕсем валли апат-çимĕç хатĕрлемелли плана тултармалла:

а) шултра апатсем 716.000 тонна

б) çĕрулмипе тымарçимĕçсем 73.127 » »

в) 120.000 тоннăран кая мар силос хывса хăвармалла.

32. Выльăх-чĕрлĕх витисене тумалли тата юсамалли плана октябрĕн 1-мĕш тĕлне тултармалла.

33. Колхозсене вĕсен фермисене комплектлама тата ĕнесĕр колхозниксене сутакан пăрусене кĕртсе, колхозниксен килĕсенче мăйракаллă шултра выльăхсен пăрăвĕсене 58.000 пуç ўстермелле.

а) Фермăсене комплектлама колхозниксенчен, рабочисенчен тата служащисенчен, малтан контрактацилесе тăрăх, 25.000 пăру сутăн илмелле.

б) Сурăхсемпе качакасен путеккисене 30.000 пуç ўстермелле.

34. 1942 çулта шкулсемпе тĕрлĕ курссем урлă вĕрентсе хатĕрлемелле:

а) механизаторла кадрсем 1.580 çын

б) колхозри ертсе пыракан кадрсем 1.380 »

в) массăллă квалификациллĕ кадрсем 7.800 »

35. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе туса ирттермелли ветеринариллĕ профилактика тата зоотехника мероприятисене пурне те пурнăçа кĕртмелле.

36. Çак обязательствăсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес ĕçе пирвайхи хут — çураки пĕтнĕ хыççăн, иккĕмĕш хут — тырпула пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра тата виççĕмĕш хут — Сталинла Конституци кунĕ умĕн туса ирттерес.

«Социалистическое земледелие» хаçат редакцине ăмăртăвăн арбитрĕ пулма ыйтас.

Тухăçлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ўстерессишĕн, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшпе малашне те тĕреклетессишĕн кĕрешсе, мĕнпур вăйсемпе средствăсене ĕçе ярар, резервсемпе пĕтĕмпех тата кирлĕ пек усă курар. Районсем, колхозсем, МТС-сем, бригадăсем, звеносем, колхозниксем, колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса çĕнĕ çитĕнўсем тăвар.

Хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата промышленность валли чĕртавар парар.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ хушнипе çак юлташсем алă пуснă:

Чарыков—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ; **Пивоваров**—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ; **Сомов**—Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ; **Андреева**—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ; **Малов**—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ; **Коротков**—ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ; **Чернов**—Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Политсектор начальникĕ; **Мартынов**—ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ; **Валеев**—ВКП(б) Чкаловски райкомĕн секретарĕ; **Кузьмин**—ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ; **Кулыгин**—Кувакино районĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен «Путь Ильича» колхозран; **Хозикова**—Сĕнтĕр районĕнчи «Первая борозда» колхозри колхозница-орденоносец; **Ягранин**—Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ; **Северов**—Чкаловски районри МТС-ăн старши механикĕ; **Жуленькова**—Пăрачкав районĕнчи çĕрĕç пайĕн старши зоотехникĕ; **Андреев**—Советски районри «Сеятель» колхозăн председателĕ; **Андреева**—Красноармейски районри «Родина» колхозра сурăхсем пăхакан; **Степанов**—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен управленин начальникĕ; **Петров**—Октябрьски райсовет исполкомĕн председателĕ; **Андреева**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия» колхозри таварлă сĕт-çу фермин заведующийĕ; **Федоров**—Первомайски районри çĕрĕç пайĕн агрономĕ; **Алексеев**—Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ; **Иванова**—Тăвай МТС-чи тракториска; **Медведев**—Çĕмĕрле МТС-чи комбайнер; **Яковлев**—Шупашкар МТС-чи комбайнер; **Ашмарин**—Етĕрне МТС-чи политотдел начальникĕ; **Буинцев**—Çĕрпў районĕнчи «Красный бригадир» колхозăн конюхĕ; **Алексеева**—Канаш районĕнчи «Канаш» колхозăн звеньевойĕ; **Вислобоков**—Улатăр райсовет исполкомĕн председателĕ; **Платонова**—Элĕк районĕнчи «Красная Армия» колхозăн ферма заведующийĕ; **Макаров**—Йĕпреç МТС-чи тракторсен бригадин бригадирĕ; **Кириллов**—Ишлей МТС-чи старши механик; **Логинов**—Калинински районри çĕрĕç пайĕн старши агрономĕ; **Яблонский**—Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозăн ферма заведующийĕ; **Симаков**—Куславкка районĕнчи «Коммунист» колхозăн председателĕ; **Кириллова**—Комсомольски районри Сталин ячĕпе тăракан колхозри овощевод; **Краснова**—Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхозри сысна пăхакан; **Яшин**—Елчĕк МТС-ĕн директорĕ, **Осипов**—Вăрнар МТС-ĕн директорĕ.

Греци патриочĕсем И. В. Сталин патне янă саламсем

Мартăн 25-мĕшĕнче, Грецин никама пăхăнманлăх уявĕн кунĕнче, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ ячĕпе ырă сунса янă саламсем нумай килнĕ. Çав саламсене пирĕнпе туслă колонисем Нью-Йоркран, Бостонран, Çĕнĕ Орлеанран, Портландран (США), Каиртан, Александрирен (Египет), Кэйптаунран, Иоганнесбургран (Кăнтăр Африка Союзĕ), Буэнос-Айресран (Аргентина), Монреальрен (Канада), Санд-Ягоран (Чили), Мехикоран (Мексика), Дамаскран, Бейрутран (Сирия), Бейртан (Хĕвелтухăç Африкăн Португали пайĕ) янă, Грецин суту-илў флочĕн офицерĕсемпе матросĕсем Ливерпульрен янă тата ытти те. Сталин юлташа ырă сунса саламласа тата Хĕрлĕ Çар çавтери геройла кĕрешни вĕсене питех те хавхалантарнине палăртса, грек патриочĕсем ирĕклĕхе юратакан пур халăхсен тăшманне — гитлеризма çĕнтерессине çирĕппĕн шанса тăни çинчен ĕнентереççĕ. «Греци халăхĕ вырăс халăхĕ енче пулса, Гитлерпа унăн шайккине мĕн пĕтерсе тăкиччене кĕрешме пăрахас çук», — тесе çырнă грек патриочĕсем. (ТАСС).

И. В. Сталин юлташ Великобританин посолне А. Кэрр господина йышăнни

Мартăн 28-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Великобританин посолне А. Кэрр господина йышăннă. Йышăнăва Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ хутшăннă.

Калаçу икĕ сехет ытла пынă.

Японин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ господин Наотаке Сато Куйбышева çитни

Мартăн 28-мĕшĕнче Куйбышев хулине Японин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ господин Наотаке Сато çитнĕ.

Сато господина Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн протокольнăй отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ тата Японин ССР Союзĕнчи ĕçсен повереннăйĕ Миякава ертсе пынипе Япони посольствин составĕ кĕтсе илнĕ.

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Хĕрлĕ Çарĕн высши начальство составĕнчи аялтарахра асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсене парас:

ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ

Алексей Михайлович Городнянскине
Федор Васильевич Камкова
Антон Иванович Лопатина

АВИАЦИН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ

Федор Яковлевич Фалалеева.

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Емельян Иванович Василенкăна
Тимофей Владимирович Дедеоглуна
Иван Терентьевич Замерцева
Заки Юсупович Кутлина
Александр Алексеевич Носкова
Александр Михайлович Пламеневскине
Константин Иванович Провалова
Алексей Павлович Шарагина.

АРТИЛЛЕРИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Николай Трофимович Селяха.

АВИАЦИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Александр Михайлович Рафаловича
Василий Георгиевич Рязанова.

ТАНКОВĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Ефим Григорьевич Пушкина.

ТЕХНИЧЕСКИ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Сергей Андреевич Степанова.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **И. СТАЛИН.**

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ **Я. ЧАДАЕВ.**

Мускав, Кремль, 1942 çулти мартăн 27-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен начальствующи составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçакан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çавсене ЛЕНИН орденĕпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА» медалĕ парса Совет Союз Геройĕн званине парас:

1. Майора Павел Петрович **Глазкова**
2. Майора Иван Михайлович **Зайкина**
3. Майора Франц Адольфович **Минневича**
4. Капитана Александр Иванович **Шапошникова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль, 1942 çулти мартăн 29-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи составне орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçакан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — 15 çынна: полковой комиссара **И. Ф. Абаудина,** генерал-майора **С. С. Бирюзова,** батальонăн комиссара **Г. Т. Буденна,** генерал-майора **Е. И. Василенкăна,** артиллерин генерал-майорне **М. П. Дмитриева,** генерал-лейтенанта **Ф. Я. Костенкăна** т. ыт. те.

ХЕРЛЕ ЯЛАВ орденĕпе—129 çынна;

ХЕРЛЕ ÇĂЛТĂР орденĕпе—100 çынна;

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе—8 çынна наградăланă. (ТАСС).

Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн уйрăм строительство работникĕсене наградăлани

Оборона заводĕсене тăвас ĕçĕнче правительство панă заданисене кĕске вăхăтрах кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн уйрăм строительство работникĕсене наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — **И. И. Абрамовича, Ф. Г. Долгова, А. П. Лепилова, В. В. Смирнова** тата **Е. М. Терещенкăна.**

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 36 çынна;

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе — 106 çынна;

«ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе — 110 çынна;

«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе—77 çынна наградăланă. (ТАСС).

Ленинград облаçĕнчи партизансен отрячĕсем нимĕç оккупанчĕсене аркатмаллах пыра-пыра çапни

Ленинград партизанĕсен 8 уйăх хушшинчи боевой ĕçĕсен итогĕсем

Ленинград облаçĕнчи партизансем отечественнăй асла вăрçăн 8 уйăхĕ хушшинче нимĕç оккупанчĕсене чĕрĕ вăйпа боевой техникăна тĕлĕнмелле питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Çав вăхăт хушшинче партизансен отрячĕсем нимĕçсен 16.075 салтакне, 629 офицерне, 11 полковникне тата 3 генералне пĕтерсе тăкнă, гестапон 67 агентне, 163 шпионна тата предателе персе пăрахнă. Нимĕçсен 116 салтакне тата 11 офицерне тыткăна илнĕ.

Партизансем 111 хут поездсене сирпĕнтерсе янă, çавăн чухне боеприпассемпе техникăна тата гитлерăн салтакĕсене турттарса пыракан 700 вагон ытла çĕмĕрĕлнĕ.

Вăрçăн 8 уйăхĕ хушшинче партизансем противникăн çар чаçĕсемпе соединенийĕсен 8 штабне çапса аркатнă, нимĕçсен 69 самолетне, 90 танкĕпе танкеткине, 25 бронемашинине, 1.693 грузовой автомашинине автобусне, 188 çăмăл автомашинине, горючи тултарнă 99 цистернине, 362 мотоциклне, 235 велосипедне, 64 трактор-тягачĕпе дрезинне, 27 орудине, 69 пулеметпа миномётне, боеприпассемпе продовольстви тата ытти çар пурлăхне турттарса пыракан 274 лавне, 359 лашине пĕтерсе тăкнă. Çыхăнăвăн 529 узелĕпе линине сиенленĕ тата пĕтерсе тăкнă.

Çав вăхăт хушшинчех Ленинград партизанĕсем боеприпассем тиенĕ 2 вагона, боеприпассемпе горючи тата обмундировани тиенĕ 125 склада, чугунçулăн 5 станцине, шоссепе чугунçулсен 388 кĕперне сирпĕнтерсе тата вут тивертсе янă, чугунçула 77 тĕлте взрыв туса сирпĕнтернĕ, телефонпа радион 18 станцине çĕмĕрнĕ.

Гитлеровецсене хирĕç пынă çапăçусенче партизансем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: пĕр самолет, 2 оруди, 54 пулемет, 5 миномет, 75 автомат, 200 ытла винтовка, 54 пистолет, 3 автомашина, 2 мотоцикл, продовольстви тата çар пурлăхĕ тиенĕ 54 лав, 118 лаша, 8 радиостанци, 27.600 ытла пăшал патронĕсем, 3.000 снаряд, 300 мина, 230 граната тата унсăр пуçне боеприпассем тултарнă вуншар ещĕк, 150 мăшăр йĕлтĕр тата ытти тĕрлĕрен çар пурлăхĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Севастопольри предприятисенче май уявĕ умĕнхи ăмăрту пуçланса кайнă

СЕВАСТОПОЛЬ, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Костенко юлташ директор пулса тăракан Н-ски заводри коллектив пуçарнипе, Севастопольри предприятисенче май уявĕ умĕнхи ăмăрту пуçланса кайнă. Ăмăртăва пуçарса яракансем апрель уйăхĕнчи плана срокчен пурнăçа кĕртме обязательство илнĕ.

Завод коллективĕ хулари куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава хăй аллинче тытать. Ку завод коллективĕ завода паракан плансене уйăхран уйăха ирттерсе тултарса пырать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступленилле çапăçусем туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче противникăн контратакăсем тунă, вĕсене пирĕн войскăсем, тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе, сире-сире пăрахнă.

Мартăн 27-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 8 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 27-мĕшĕнче пирĕн авиачаçсем нимĕçсенне 10 танк, 2 бронемашина, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 80 автомашина ытла, боеприпассем тиенĕ 65 лав, горючи тултарнă икĕ автоцистерна, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 орудине, 13 миномет, зенитнăй пулеметсен 8 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити çапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 28 блиндажĕпе ДЗОТ-не тата землянкине çĕмĕрсе тăкнă, нимĕçсен 5 танкне, 3 орудине, 12 станковăй пулеметне, минометсен 2 батарейине, 2 трактор-тягачне, прицепĕсемпе пĕрлех, тата пĕр походнăй кухнине пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех противникăн çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 5 танк, 24 пулемет, 4 миномет, 3 оруди, 2 бронемашина, автоматсемпе винтовкăсем тата пистолетсем нумай, танксене хирĕç пемелли пăшалсем, 1.440 снаряд тата снарядсем хунă 10 ещĕк, 3400 мина тата минăсем хунă 100 ещĕк, 101.000 винтовка патронĕсем, 10 грузовой машина, 15 урапа тата ытти снаряженисем. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 3.200 вилли выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн пĕр стрелковăй соединени, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине сĕнтерсе пырса, малалла куçнă тата нимĕçсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем, виллисене шутласан кăна, 850 çын пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардейски чаçăн боецĕсем тăшманăн 14 блиндажне тытса илнĕ.

* * *

Калинин фрончĕнчи подразделенисенчен пĕрин йĕлтĕрçисем противникăн пĕр кун хушшинче 193 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Дубанос юлташ командир пулса ертсе пынипе пирĕн боецсен взвочĕ нимĕçсен вездеходсем çинче куçса пыракан пехотин контратакине ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе, пирĕн боецсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старши лейтенант Герасимов командир пулса ертсе пынипе пирĕн разведчиксен группи противник тылĕнче кĕрешнĕ вăхăтра противникăн çул çинче пыракан обозне асăрханă. Разведчиксем пулеметсемпе автоматсенчен пеме пуçланă. Противникăн пĕр офицерне тата 11 салтакне вĕлернĕ, ыттисем тарса çухалнă. Пирĕн разведчиксем 8 винтовка, взрывсем тумалли япаласем тултарнă темиçе ещĕк, документсем тытса илнĕ тата нимĕçсен 4 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Курск облаçĕн вăхăтлăха нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен П. юлташăн партизанла отрячĕ нумаях пулмасть нимĕçсен 513-мĕш пехотнăй полкĕн 3-мĕш батальонăн штабне çĕмĕрсе тăкнă. Сĕм çĕрле партизансен отрячĕн групписенчен пĕри штаб вырнаçса тăнă çурт патне систермесĕр пырса тухнă та çав çурт çине гранатăсем вăркăнтарнă. Ялта пăтрану пуçланса кайнă. Штаба сыхлакан салтаксем пулеметсенчен пеме тытăннă. Çав вăхăтра вара вĕсене хыçалтан партизансен тепĕр ушкăнĕ пырса çапнă. Пĕр сехет çапăçнă хыççăн партизансем 59 гитлеровеца, вăл шутра 8 офицера, пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем радиостанци, станковăй пулемет, боеприпассем тултарнă 10 ещĕк, гранатăсемпе минăсем нумай тата тĕрлĕрен снаряжени тытса илнĕ. Штаб документĕсемпе карттăсене отряд Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕн штабне пырса панă.

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 17-мĕш сапернăй батальонран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Вильгельм Глюккерт çапла каласа панă: «Мана çара 1942 çулти январь уйăхĕ пĕтнĕ тĕле илчĕç. Унччен эпĕ Франкфурт хулинче çар заводĕнче ĕçлеттĕм. Топливо çитмен пирки нумай предприятисем, вăл шутра çара кирлĕ заводсем те, чарăна-чарăна ĕçлеççĕ. Самолетсен массăллă деталĕсем валли штампсем хатĕрлекен Франкфуртри завод та январь уйăхĕнче темиçе хутчен те чарăнса ларчĕ. Германире пур çĕрте те халăх тарăхни ӳссе пынине курăнать. Халăх вăрçăхса çитнĕ. Пурте, кирек мĕнле пулсан та, вăрçа хăвăртрах пĕтерессине çунаççĕ. Франкфурт хулинче пурнакансем нумайĕшĕсем çапла каласа параççĕ: Мангеймра хĕрарăмсен вăрçа хирĕçле пысăк демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Январь уйăхĕнче Бокенхеймра (Франкфурт) листовкăсем çыпăçтарса тухнă пулнă. Вĕсем çинче «Гитлер тĕп пултăр!», «Вăрçă тĕп пултăр!», тесе çырнă. Ун пек листовкăсене эпĕ хам та нумай курнă».

* * *

Герцеговинăра (Югославия) кĕрешекен партизанла отрядсем Германипе Итали оккупанчĕсене татти-сыххисĕр пыра-пыра çапаççĕ. Мартăн 10-мĕшĕнче партизансем нимĕçсен транспорт колоннине çĕмĕрсе тăкнă, çав колоннăра 31 грузовой автомашина пулнă. Ун чухне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 45 çынна вĕлернĕ тата 42 салтакпа офицера тыткăна илнĕ. 100 винтовка, 7 пулемет, 13 автомат тата 5.000 патрон тытса илнĕ.

Оккупантсене хирĕç пыракан çапăçусенче Герцеговина партизанĕсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 1050 çынна вĕлернĕ е тыткăна илнĕ, 395 винтовка, 49 пулемет, 7 миномет, 2 тупă, 3 танк тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Унсăр пуçне партизансем 2 танк, 25 автомашина, 4 паровоз, 18 вагон тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе материалсем нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталин юлташ фронта пулăшас ĕçе вăйлатма чĕнни çине ответлесе, Туркмен ССР-ĕн Ташауз облаçĕнчи колхозсем мартăн 20-мĕш тĕлне государствăна аш-какай тăратмалли çурçулхи плана 142 процент тултарнă.

Мартăн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăлтă улшăнусемех те пулман.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсене халăх пурăнакан вăйлăн çирĕплетнĕ пунктран хăваласа кăларнă. Каялла чакакан противник 4 оруди, 7 миномет, 12 пулемет, боеприпассен складне тата ытти çар материалĕсене те пăрахса хăварнă. Нимĕçсем халăх пурăнакан çав пункта каялла илесшĕн темиçе хутчен те хаяррăн çапăçса пăхнă. Противникăн пур контратакисене те, противника пысăк çухатусем кӳрсе, сирсе янă. Пункт патне пыракан çулсем çинче тăшманăн сахалтан та 300 вилли тата çĕмĕрĕлнĕ 2 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн артиллерин подразделенийĕ темиçе кун хушшинче нимĕçсен 3 орудине, пулеметсен 16 точкине, минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ тата противникăн пехотине виçĕ ротăна çити çапаласа янă.

* * *

Красноармеец-ездовой Турыгин юлташ хăйне панă задание пурнăçа кĕртнĕ хыççăн малти позицие таврăннă чухне нимĕçсен ял патне çывхарса пыракан 3 танкне курнă. Турыгин юлташ кĕрт хыçне пытанса ларнă та, малта пыракан танк хăй тĕлне çитсен, машина çине çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывăтнă. Танка вут хыпса илнĕ. Тарма тытăннă нимĕç танкисчĕсене хăюллă боец пурне те пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн ытти танкĕсем каялла çавăрăнса кайнă.

* * *

Серов красноармеец ытти икĕ боецпа пĕрле, противник персе тăнине пăхмасăр, нимĕçсем тăнă ял патне систермесĕр шăвăнса пынă та нимĕçсем çирĕплетнĕ огневой точка туса хунă пӳрте вăркăнса кĕрсе кайнă. Ал вĕççĕн тăрса тытăçса, пирĕн виçĕ красноармеец нимĕçсен икĕ салтакне вĕлернĕ, теприне тыткăна илнĕ. Ытти гитлеровецсем тарнă, вĕсем 2 станковăй пулемет пăрахса хăварнă.

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш танковăй дивизийĕн 103-мĕш артполкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Д. Эндеман çапла каласа панă: «Декабрьпе январь уйăхĕсенче пирĕн полк хăйĕн материальнăй чаçне 60 процентран кая мар çухатрĕ. Рядовой салтаксемпе унтер-офицерсене нумайĕшне пехотăна куçарчĕç. Эпĕ О. хули патне пыракан çулсене партизансенчен сыхласа тăма янă отряда лекрĕм. Пире час-часах разведкăна яратчĕç, анчах эпир партизансене шыранă çĕрте пĕрре те тупман. Нумаях пулмасть пирĕн çине ял çывăхĕнче пулеметсенчен, автоматсенчен тата винтовкăсенчен печĕç. Çапла çавтери кĕтмен çĕртен тапăннипе пирĕнтен пĕри те алла хĕçпăшал тытма ĕлкĕреймерĕ. Мана алăран амантрĕç те, эпĕ юр çине тăрăнса кайрăм. Партизансене хамăн юнашарах курсассăн, эпĕ хам пурнăçăн юлашки сехечĕ çитрĕ ĕнтĕ, мана халех штыкпа чиксе вĕлереççĕ, тесе шухăшларăм. Анчах ун пек пулмарĕ. Икĕ партизан мана çунасем çине хучĕç те вăрмана илсе кайрĕç. Вăрмана çитсе чарăнсанах, врач манăн алла çыхрĕ. Партизансен лагерĕнче мана допрос турĕç, апат çитертĕç, вара каç пулса çитсен, мана фронт линийĕ урлă каçарса советсен пĕр чаçне çитерсе пачĕç».

* * *

Харьков облаçĕн халĕ гитлеровецсенчен ирĕке кăларнă Криштоповка ялĕнчи колхозниксем нимĕçсемпе румын бандичĕсем туса хăварнă тискер хайăкла ĕçсемпе çаратусем çинчен акт çырнă. Яла кĕрсенех, нимĕçсемпе румынсем пĕр пӳрте ялти мирлĕ 27 гражданина пухса питĕрсе лартнă та, пӳртне бензин сапса вут тивертсе янă. Оккупантсем ватă колхозниксене вунă çынна персе пăрахнă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе тӳсеймесĕр каялла чакакан гитлеровецсем халăха йăлтах çаратса тухнă, 86 пӳрте çунтарса янă.

* * *

Апрель уйăхĕнчен пуçласа Германире халăха паракан продуктсен ахаль те питех те пĕчĕк нормисене татах та ытларах чакараççĕ. Çакна кăтартса парсан та çителĕклĕ: Германири çитĕннĕ халăхăн пысăк пайне памалли кулленхи çăкăр нормине 285 грамм таран кăна хăвармалла тунă. Гитлерла правительсем çавăн çинчен халăха пĕлтерсен, Германин чылай хулисенче, вăл шутра Кельнра, Хеймницра, Дюссельдорфра, пăлханусем пулса иртнĕ. Хăшпĕр заводсенче (сăмахран, Гамбургри Блом тата Фос верфĕнче, Лейна хулинчи Лейне-Веркен хими предприятийĕсенче, Рейдт хулинчи спецхурçăпа ферросплавсен заводĕнче) рабочисем продовольстви нормисене чакарнине хирĕç протестлесе коллективлă заявленисем панă. Çакă вара гитлерла пуçлăхсене Германи халăхне хăратмалла чĕретлĕ сăмахсем калаттарасалла тунă. Çапла, «Дас Рейх» хаçатра Геббельсăн «Чунтан каласни» ятлă статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра шăпах çапла каланă: «Германире кам та пулин вăрçа хутшăнмасăр айккинче пĕрсе юлнине правительство тӳсме пултараймасть. Кам урăхла тума хăять, ăна асаплантарса вĕлерессин таранах йывăр айăп кĕтет. Кам чĕртавар е таварсем пытарса усрать, ăна вĕлермелле туса айăплаççĕ», т. ыт. те. Статьяра пĕтĕмпех çавăн пек сăмахсем. Унтан Геббельс çапла каланă: вăрçă малашне Германи халăхĕнчен татах та пысăкрах жертвăсем ыйтĕ, тенĕ.

Гитлер хӳрешкин çакăн пек бандитла выступленийĕ Германи халăхĕ хушшинче çитменлĕх пирки тарăхни малалла ӳссе пынине кăтартать, Германи халăхĕ Гитлер пуçласа янă вăрçă шанчăксăррине курса ăна пĕтермелли майсем шыранине кăтартать. Çав тарăху, гитлеровецсем юнаса хăратнине тата вĕсен юнлă террорне пăхмасăрах, кунсерен ӳсекĕçсемĕн ӳссе пырĕ.

Мартăн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă тата фронтăн хăшпĕр участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Мартăн 28-мĕшĕнче нимĕçсен 37 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 18 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 28-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 4 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 90 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне, 15 полевой тата зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçулсем çинчи горючи тултарнă темиçе цистернăна тата боеприпассем тиенĕ темиçе вагона сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 3 ротăна çити çапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противникăн вăйлăн хирĕç тăнине сĕнтерсе, пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 427-мĕш пехотнăй полкне çапса аркатнă, унăн икĕ батальонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене, виллисене шутласан кăна, 1.000 çын ытла çухатнă. 14 миномет, 20 пулемет, 40 автомашина, 12 оруди, 51 ДЗОТ пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 6 оруди, 7 миномет, 7 пулемет тата боеприпассем нумай. Илнĕ трофейăсене шута илес ĕç пырать. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ тата противникăн 350 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче: 4 оруди, 2 миномет, 2 станковăй пулемет, çавăн пекех тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалпа çар пурлăхĕ пур.

* * *

Лейтенант Росс юлташăн зенитнăй орудийĕн расчечĕ юлашки темиçе кун хушшинче противникăн 6 самолетне персе антарнă.

* * *

Лейтенант Серебренников командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем, пирĕн наступлени тăвакан стрелковăй подразделение пулăшса пырса, противник персе тăнине пăхмасăрах танксене хирĕç пемелли хăйсен орудине уçă позицие кăларса лартнă та тăшманăн войскисем çине пеме тытăннă. Пирĕн боецсен наступленине чарма хăтланса, нимĕçсем контратакăна 2 танк кĕртсе янă. Серебренников юлташ тăшманăн танкĕсем çине пеме тытăннă. Темиçе хут персессĕн, нимĕçсен пĕр танкне çĕмĕрнĕ, теприне вут хыптарнă та, вăл вара каялла çавăрăнса кайнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕ çинче кĕрешекен О. тата Т. юлташсен партизанла отрячĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 95 çынна вĕлерсе пĕтернĕ тата 50 çынна çити амантнă. Партизансем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче: 5 пулемет, 3 автомат, 26 винтовка, 2 пистолет, 1000 ытла винтовка патронĕсем, 100 ручной граната тата радиостанци.

* * *

Нимĕçсен 255-мĕш пехотнăй дивизийĕн 465-мĕш полкĕнчи 2-мĕш батальонран тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Позер çапла каласа кăтартнă: «Мана сентябрь уйăхĕнче амантрĕç. Вара эпĕ Польшăра тата Чехире госпитальсенче выртрăм. Тылра эпĕ мĕн курса мĕн илтнĕ? Чехире саботаж питех те анлăн сарăлса пырать. Нимĕçсен влаçĕсем пур хуласенче те приказсем çыпăçтарса тултарнă. Приказсенче çапла каланă: саботаж туса айăпа кĕнĕ кашни чеха асаплантарса вĕлермелле, тенĕ. Çав приказсене эпĕ хам куçпа курса хам вуланă. Чехсем пурте гитлерла Германия тĕп пуласси не тата хăйсен республики ура çине тăрассине кĕтеççĕ. Лазаретсем пурте туп-тулли. Ауссиг, Кельн, Дюссельдорф пек хуласенчи мĕнпур гостиницăсенчен лазаретсем туса хунă. Çавăн пекех тата нумай казармăсенчен те лазаретсем туса хунă. Вена пĕтĕмпех лазарет хули пулса тăнă. Фронта çитсен, эпĕ лайăх курса пĕлтĕм: пирĕн войскăсен положенийĕ питех те йывăр».

* * *

Каялла чакакан гитлерла бандитсем Ленинград облаçĕнчи Пересвет-Остров ялне йăлтах çаратса тухса, тĕппипех çунтарса янă. Пушарта колхозниксен пӳрчĕсем, ялсовет çуртĕ, икĕ шкул, кооператив, колхоз çуртĕсем, сарайĕсем тата ытти çуртйĕрсем те йăлтах пĕтнĕ. Нумайччен мăшкăлласа асаплантарнă хыççăн гитлерла ирсĕрсем çав ялти пĕр айăпсăр Сибрянковпа Захарова персе пăрахнă.

* * *

Германире вырăс пирки ачасем вилесси питех те ӳсе кайнă. Пур çĕрте те дифтери тата скарлатина чирĕсем сарăлнă. Пĕр Дрезденра кăна февраль уйăхĕнче вырăпа тата ерекен чирсемпе чирлесе 3.940 ача вилнĕ. Хуларан пур шкулсене те хупса лартнă. Ачасене медицина пулăшăвĕ памаççĕ, мĕншĕн тесен врачсене пурне те фронта илсе кайнă. Нумаях пулмасть, гитлерла партин çуртĕ умĕнче ачасем валли çăкăр ыйтакан хĕрарăмсен хăй тĕллĕн пуçланса кайнă демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Пухăннă халăх хушшинчен: «Ылханлă вăрçа пĕтерĕр!» тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕннĕ. Чĕнсе пынă полици пухăннă халăха салатса яма пултарайман. Вара демонстрацие штурмовиксен отрячĕ хĕçпăшалсенчен персе салатса янă.

Мартăн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăлтă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть, противник вăйлăн хирĕç тăнине сĕнтерсе, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене, виллисене шутласан кăна, 500 çын ытла çухатнă. Пирĕн боецсем пĕр танк, 3 бронеплощадка, 25 оруди, 24 миномет, 25 станковăй тата 55 ручной пулемет, 560 винтовка, 57 автомат, 1.000 яхăн снаряд, 3.000 мина, 240.000 винтовка патронĕсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра Захаров юлташăн гвардейски чаçĕ пĕр кун хушшинче противникăн икĕ контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 çити вилли выртса юлнă.

* * *

Противникăн контратакине сирсе ярса, пирĕн пĕр часть (Калинин фрончĕ) нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 6 танкне çĕмĕрнĕ, 7 блиндажне ишĕлтерсе антарнă тата нумай трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра Мишенко юлташ командир пулса ертсе пыракан часть К. ялĕ патĕнчи çапăçура тăшманăнне 5 оруди, пулеметсен 15 точкине тата 10 миномет пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 250 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Рагулин юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн 10 разведчик, хăйсене панă задание противникăн тылĕнче пурнăçа кĕртнĕ чухне, нимĕçсен отрядне асăрхаса илнĕ. Автоматсенчен кĕтмен çĕртен пеме тытăнса, пирĕн разведчиксем 20 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Ыттисем тарса пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ Могилев облаçĕн территорийĕ çинче кĕрешекен Ю. юлташăн партизанла отрячĕ, пĕр çул çинче засада организацилесе, нимĕçсен пысăк автоколоннине аркатса тăкнă. Партизансем грузсемпе боеприпассем тиенĕ 50 ытла автомашина, нимĕçсен 121 салтакне тата темиçе офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансен аллине пысăк трофейăсем лекнĕ. Темиçе кун иртсен çав отрядах тепĕр çул çинче нимĕçсен 102 автомашинине çунтарса янă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 263-мĕш пехотнăй дивизийĕн сапернăй батальонĕнчи 3-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ фельдфебель Георг Штальберг çапла каласа панă: «Февраль уйăхĕ пĕтнĕ чухне пур саперсене те пехотăпа стрелковăй чаçсене куçарчĕç. Пирĕн ротăра вăрçă пуç-

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ КАНАШЛĂВĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Чăваш республикинчи колхозниксене, колхозницăсене, ялхуçалăх специалисчĕсене пурне те

ХАКЛĂ ЮЛТАШСЕМ!

Пирĕн тăван çĕршыв хаяр шухăшне пурăнса ирттерет. Гитлерла ирсĕр вахватчиксем, пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă договора ултавлăн пăсса, пирĕн мирлĕ хуласемпе ялсем çине вăрă-хурахла килсе тапăнчĕç. Хăйсем тытса илнĕ Совет районĕсенче гитлеровецсем этемле мар тискер ĕçсем тăваççĕ, алхасаççĕ. Вĕсем мирлĕ халăха çаратаççĕ, хĕрарăмсене, ачасемпе стариксене вĕлереççĕ, пĕтĕм ялсене çунтарса яраççĕ, аслă вырăс халăхĕн историллĕ памятникĕсене тата культурăн хаклă япалисене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Нимĕç фашисчĕсем ССР Союзĕнчи халăхсене тураса тума, вĕсене пусмăрла кĕртсе ўкерме ĕмĕтленеççĕ. Анчах çакă вăл нихăçан та пулаймĕ!

Пирĕн çулпуç Сталин юлташ чĕннипе, ирĕклĕхе юратакан хăватлă совет халăхĕ Германи империалисчĕсен захватчикĕсене хирĕç кĕрешме пĕр çын пек пулса çĕкленчĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем, пролетариллĕ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе кĕрешсе, Гитлерăн вăрă-хурахла çарне çĕмĕрсе тата пĕтерсе пыраççĕ. Советăн пиншер хулисемпе ялĕсене нимĕçсен пусмăрĕнчен хăтарса ирĕке кăларнă. Хĕрлĕ Çар—геройсен çарĕ—фашистсене совет çĕрĕ çинчен пĕр чарăнмасăр мелалла хăваласа пырать. Хăйĕн юнне юхтарса, çапăçу хирĕнче тĕслĕхсем пе техникăна, хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене пиншер çынна пăрахса хăварса, тĕшмаш хĕвеланăç еннелле чакать.

Сталин юлташăн историллĕ наказне пурнăçа кĕртсе, отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозлă хресченсем те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсен пĕр шухăшĕ, пĕр кăмăл—Совет çĕрĕ çинчен гитлерла оккупантсене хăвăртрах хăваласа кăларма пирĕн государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсене пулăшасси, фронтпа тыла валли ытларах та ытларах продовольстви, ялхуçалăх продукчĕсем парасси.

Иртнĕ çулта пирĕн республикăри колхозсем тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ўстерес тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнўсем турĕç. Вăтам шутпа кашни гектартан 13 центнер ытла тырпул пуçтарса илнĕ. Колхозсенчи майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 21,1 процент, сыснасен хисепĕ 34,2 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 28 процент чухлĕ ўсрĕ. Выльăхсен тупăшĕ хăпарчĕ. Иртнĕ çулта кашни гектартан çĕршер пăт тырпул туса илнĕ колхозсем пирĕн çĕршерĕн шутланаççĕ, тырпул тухăçлăхне тата выльăхсен продуктивноçне ўстернĕшĕн ĕçлĕн хушса илекен колхозниксем пиншерĕн шутланаççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсем фронта активлăн та ĕçлĕн пулăшса пыраççĕ. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене çĕршер ялхуçалăх артелĕсем срокчченех пурнăçа кĕртрĕç. Çĕршывăн оборона фондне 3.350 пăт тĕштырă, 483 пăт аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем хывнă. Нумай колхозсем хăйсен ытлашши тырăпне кооперацине сутрĕç. Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз тата Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Большевик» колхоз пуçарнипе, чылай ялхуçалăх артелĕсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма вăрлăхсем уйăрса хураççĕ.

Нимĕç захватчикĕсене татăклăнах пĕтерсе тăкас тесен нумай вăй хума кирлине эпир лайăх пĕлсе тăратпăр. Тырпул тухăçлăхне ўстерес тата выльăхсен продуктивноçне хăпартас тĕлĕшпе эпир тунă çитĕнўсем пире лăплантармалла мар. Эпир фронта пулăшасси кашни кунах вăйланса пымалла. Пирĕн тылра отечественнăй вăрçă геройĕсем пек ĕçлемелле, ĕçре çирĕп йĕркелĕх, организованность пулмалла.

Çураки вăхăчĕ—ялхуçалăх производствин чи ответлă вăхăчĕ çывхарса килет. Çураки кăçал урăхла условисенче пулса иртет. Паллă ĕнтĕ, колхозсенче ĕç вăйĕ сахалланчĕ. Машинăсемпе тракторсен тата лашасен пĕр пайне çĕршыва хўтĕлеме мобилизациленĕ. Ĕçсем вара чылаях нумайланчĕç. «Ялхуçалăх ĕçĕсенчи прорыв вăрçă фронтĕнчи пĕр-пĕр участокри ăнăçсăрлăхран сахал мар сиен кўнĕ пулĕччĕ»,—терĕ М. И. Калинин юлташ. Кашни çĕрĕç работникĕн, колхоз председателĕн, колхозникпе колхозницăн çакна ăнланса илмелле те хăйсен пĕтĕм вăйне уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерме мобилизацилемелле. Эпир çуракине ăнăçлăн ирттерни, тырпулсене вăхăтра пухса çапса кĕртни, выльăх-чĕрлĕхсене сыхласа усрани Хĕрлĕ Çара тата çĕршыва тырпул, аш-какай, пахча-çимĕçсем тата промышленноçа чĕртавар çителĕклĕ парса тăма пулăшать. Вăхăтне тата хамăрăн вăйсене пирĕн малтанах шута илсе хумалла, кадрсене чи кирлĕ участоксенче тĕрĕс валеçсе тухмалла. Çуракине хатĕрленессинче пĕчĕк ĕçсем çук—кунта пурте кирлĕ те пурте паха.

Пĕр кун та кая хăвармасăр вăрлăхсене тĕплĕн хатĕрлемелле, ĕç хатĕрĕсене йĕркене кĕртмелле, массăллă квалификациллĕ кадрсене вăйлăн хатĕрлемелле. Лашасене çураки валли лайăх хатĕрлесе çитермелле, майракаллă шултра выльăхсене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентмелле, çапла майпа лашасен пĕр пайне хуçалăхри шалти ĕçсенчен хăтармалла. Выранти тата минераллă удобренисене хатĕрлесе турттарса тухас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемелле, колхозниксем хушшинче агротехника вĕренĕвне йĕркелесе ямалла, ялхуçалăх ĕçĕсене тунă чухне агротехника мероприятийĕсене çирĕппĕн пăхăнса пырассишĕн кĕрешмелле. Çуракине лайăх хатĕрленсе, ăна кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттермелле.

Хĕрарăмсем колхозра пысăк вăй-пулса тăраççĕ. Артель ĕçĕнче колхозницăсем активлăн хутшăнса ĕçлеме пултарччăр тесе пурне те тăвас пулать, ача яслисемпе площадкисене организацилемелле, çураки вăхăтĕнче тата тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра пĕрлешсе апатланас ĕç валли продуктсем уйăрса памалла.

Хаклă юлташсем! Пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ пире фронта пулăшассине пур майпа та вăйлатса пыма, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем пама чĕнсе каларĕ. Юратнă çулпуçăн наказне пурнăçа кĕртесси—пирĕн чи пысăк ĕç.

Эпир, республикăри ялхуçалăхĕнче малта пыракансем, колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсене, комбайнерсене, выльăх ĕрчетекенсене, ялхуçалăх специалисчĕсене эпир Мордва тата Мари АССР Республикисене социализмлă ăмăртăва чĕнсе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн активлăн кĕрешме чĕнетпĕр, хамăр вара çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

Гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илмелле;

Гектартан 120 центнер çĕрулми туса илмелле;

Гектартан 4 центнер йĕтĕн сўсĕ туса илмелле;

15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа 450 гектартан кая мар ĕçлемелле;

Горючине нормăпа пăхнинчен 7 процент сахалтарах тăкакламалла;

Трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне 10 процент чухлĕ чакармалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа усрасси тата колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ўстересси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла çĕклесе пыма май парать. Вăл постановленине ырласа, эпир пур колхозниксене те ăна пĕтĕмпех пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме чĕнетпĕр, хамăр вара çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

Çамрăк выльăхсене пурне те пĕтĕмпех сыхласа усрамалла;

Ĕнесем пурте пăрулаччăр тата пĕтĕ кĕсресем пурте кăмлаччăр тесе тăрăшмалла;

Кашни ĕнерен 1.500 литртан кая мар сĕт суса илмелле;

Кашни сурăхран 3 килограмм çăм касса илмелле;

100 сурăхран тата сурăх-путексенчен 120 путекрен кая мар илмелле;

Пĕр сыснаран 14 çăвăртан кая мар илмелле;

Колхозсенче выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерессине анлăн организацилемелле.

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерес тĕлĕшпе пирĕн республика Мордва тата Мари АСС Республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕ. Хамăр çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртес тата тăванла республикăсен ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна йышăнас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

Колхозниксемпе колхозницăсем! Хăвăрăн уйхирсенче, колхоз фермисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕр! Фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах продуктсем парăр! Эпир вăя шеллемесĕр ĕçлени паттăр воинсене тырпул, аш-какай, çу, тумтирсем кирлĕ чухлех парса тăма пулăшнине асра тытăр!

Трактористсемпе комбайнерсем! Ялхуçалăх ĕçĕсене тума хăвăрăн тракторсемпе комбайнсене тĕплĕн хатĕрлĕр! Ĕçĕн пысăк пахалăхĕшĕн тата çунтармалли материалсемпе сĕрмелли материалсене перекетлĕн расходлассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярăр, машинăсене сыхлăр! Хăвăрăн ĕçри квалификацине ўстерсе пырăр!

Колхозсен бригадирĕсемпе звеньевойĕсем! Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хăвăр мĕн тунине тĕрĕслесе тухăр! Бригадăсемпе звеносенче çынсене тĕрĕс вырнаçтарса тăратăр, уйхирсемпе фермăсенче колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилĕр! Сирĕн бригадăри, сирĕн звенори кашни колхозник нормăсене тултарса тата ирттерсе тултарса пымалла тăвăр!

Колхозсенчи конюхсемпе выльăх ĕрчетекенсем! Сире ответлă ĕç шанса панă. Лашана сыхлăр, ăна çураки валли лайăх хатĕрлесе çитерĕр! Вăкăрсемпе ĕнесене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентĕр! Фермăсенчи выльăхсен хисепне ўстерсе пырăр, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрăр! Выльăх апачĕсене перекетлĕн тыткалăр!

Агрономсемпе зоотехниксем! Ялхуçалăх ĕçĕсене большевикла ирттерессине организацилĕр! Пысăк тухăçлă тырпул мастерĕсен тата чи лайăх животноводсен опычĕсене сарса пырăр! Колхозсенче агротехникăна вĕренессине вăйлатса ярăр, колхоз производствинчи стахановецсен çĕнĕ отрячĕсене вĕрентсе ўстерĕр!

Колхозница юлташсем! Арçынсен профессийĕсене вĕренсе алла илĕр, тракторсемпе тата комбайнсемпе ĕçлеме вĕренĕр, фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăрăр!

Юлташсем—колхозниксем, колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем, агрономсемпе зоотехниксем! Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнăр, тăванла республикăсен ăмăртăвĕнче малти вырăна йышăнассишĕн кĕрешĕр!

Икшер, виçшер çыншăн ĕçлер, нихăçанхи пек мар вăйлă тырпул туса илер, пирĕн выльăх-чĕрлĕхсен тупăшне ўстерер. Çапла тунипе эпир фронта питех те пысăк пулăшу паратпăр тата совет халăхĕ гитлеровецсене çĕнтерес вăхăта çывхартатпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ!

КАНАШЛУ ДНЕВНИКĔ

Мартăн 29-мĕшĕнче канашлу малалла пычĕ. Канашлăвăн кун йĕркинчи пĕррремĕш ыйтупа СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене пăхса усрамалли тата выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ўстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ тунă доклад тăрăх прени пычĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри мастерсем, зоотехниксемпе научнăй работниксем хăйсен çитĕнĕвĕсем çинчен каласа пачĕç, выльăх-чĕрлĕхĕн йышне, унăн продуктивноçне 1942 çулта татах та вăйлăн ўстермелли майсене палăртрĕç, тухăçларах ĕçлеме пулчĕç. Пĕрремĕш ыйтупа пренире пурĕ 15 делегат тухса каларĕ.

Пирĕн республика выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре иртнĕ çул çĕнĕ утăм турĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн хисепĕ йышлăн ўсрĕ. Çĕмĕрле, Элĕк районĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе государство панă плана пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç. Элĕк районĕнче ĕнесен хисепĕ — 45 процент, сыснасен хисепĕ — 35 процент, сурăхсен хисепĕ—45 процент ўснĕ.

Пирĕн республикăри колхозсем Мари тата Мордва АССР-семпе виççĕмĕш çул ĕнтĕ ăмăртса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çул хамăр çине илнĕ социализмлă обязательствăсене эпир чылай енĕпе ытлашшипех пурнăçларăмăр. Кашни çĕр ĕнерен 85 пăру пăхса ўстермелле пулнă пулсан, эпир 95 пăру, кашни çĕр сурăхран 110 путек ўстермелле пулнă пулсан, 112 путек пăхса ўстернĕ.

Çак çитĕнўсемпе пĕрлех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн иртнĕ çул пысăк çитменлĕхсем те нумай пулчĕç. Уйрăмăнах, çамрăк выльăхсене пăхса ўстерес ĕç çине çителĕклĕн пăхман, выльăх-чĕрлĕх усрамалли витесене тăвасси юлса пычĕ, выльăх-чĕрлĕхе искусственнăй майпа пĕтĕлентерессин пахалăхĕ начар пулчĕ. Государствăна аш-какай парас ĕçре выльăхсене самăртса паманни пирĕн чи пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Выльăхсене эпир самăртмасăр паратпăр, е çитĕнсе çитмесĕрех пусатпăр. Çапла вара государствăна паха аш-какай парайман. Çакăн пирки иртнĕ çулта пирĕн пиншер выльăха ытлашши пусма лекнĕ.

— 1942 çулта выльăх-чĕрлĕхе пирĕн татах та вăйлăн ĕрчетмелле, вĕсен продуктивноçне татах ўстермелле, — тет Пивоваров юлташ.

Кун йĕркин иккĕмĕш ыйтăвĕпе 1941 ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата çуракине ирттерес тĕлĕшри задачăсем çинчен канашлура ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Сомов юлташ доклад туса пачĕ.

Сомов юлташ хăйĕн докладĕнче пирĕн республика иртнĕ çул вăтам шутпа кашни гектартан 13 центнер ытла тĕштырă туса илни çинчен, акăнакан çĕр лаптăкĕ малалла ўссе пыни çинчен каларĕ. Тырпул тухăçне хăпартас тĕлĕшпе уйрăмах Чкаловски, Елчĕк, Вăрнар, Калинински районсем тата ытти районсенчи уйрăм колхозсем лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Çакăнпа пĕрлех пирĕн ялхуçалăхĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур. Уйрăм районсенче вăрлăхлăх тырăсене хатĕрлесси аван пырать пулсан та, республикăра çуракинче акмалли вăрлăхсене пурĕ 85 процент çеç уйăрса çитернĕ. Клевер вăррисене 30,6 процент çеç хатĕрленĕ, чылай районсенче аван çапас ĕç юлса пырать.

Çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтересси-шĕн, çуракине хатĕрленсе кăçал татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансене, колхозниксемпе колхозницăсене, большевикла кĕрешме чĕнет Сомов юлташ.

Сомов юлташ докладĕ тăрăх пренире пурĕ 17 çын тухса каларĕ. Калинински районри «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ Сантимин юлташ хăйсен колхозĕ вăйлă тырпулпа епле кĕрешни çинчен каласа пачĕ. «Чăваш Коммуни» колхоз иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 18-шар центнер, уйрăм бригадăсем 24-шар центнер тĕштырă туса илнĕ. Вăйлă тырпул туса илессишĕн хастарлăн ĕçленипе колхозăн 5 бригади ĕçшĕн хушса тўлемелли йĕркепе тырă илнĕ.

Ялхуçалăх институчĕн профессорĕ Пельцих юлташ делегатсене кок-сагыз, махорка культурисене епле майпа тухăçлăнрах туса илмелли çинчен тата кăçал хура çĕртме çинче ир пулакан тырăсене, çĕрулмине епле туса илмелли çинчен каласа пачĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ республикăри районсем, колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе пынине тишкĕрсе тухса, уйрăм районсенчи çĕрĕç пайĕсен, колхозсен ĕçне хытă критикăларĕ. Хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсен руководителĕсем халĕ те колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре сўрĕккĕн ертсе пынине паллă турĕ.

ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Мартынов юлташ республикăри колхозсенче иртнĕ ялхуçалăх çулне вĕçлесе отчетсем тăвасси тата тупăшсене валеççесси юлса пыни çинчен каларĕ.

— Ишлей районĕнче 101 колхоз. Вĕсенчен 29-шĕ çеç иртнĕ çулхи ĕçсен отчетне тума тытăннă, — тет Мартынов юлташ.

Умра тăракан задачăсене анлăн çутатса, канашлура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах каларĕ.

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра тăван çĕршыва ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, сĕт-çу, промышленность валли чĕртавар туса пани çĕнтерў никĕсне хуни пулать. Кашни ытлашши центнер тырă, аш-какай фашистсен урнă йыткĕсене пырса çапакан, çĕмĕрекен снаряд пулать. Вăйлă тырпул туса илесси халĕ — фронт заказĕ, çĕнтерў тăвас ыйтăва татса паракан фактор пулса тăрать. Вăл задачăна пурнăçлассишĕн пирĕн ывăнма пĕлмесĕр, фронтри пек хастарлăн ĕçлемелле. Вăл задачăна эпир çуракине лайăх хатĕрленсе тухнипе, ăна пысăк пахалăхпа туса ирттернипе çеç пурнăçлама пултаратпăр. Çакăнта турттăм вăйĕ хăйне тивĕç вырăн йышăнса тăрать. Пуринчен те паллă, пирĕн кăçал лашасен хисепĕ çителĕксĕр. Пиншер вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене ĕçе кĕртес пулать. Хуçалăх ĕçĕсенчен лашасене пушатса, уйри йывăр ĕçсем çине куçарас пулать.

Хĕрарăм колхозра—пысăк вăй. Вĕсем ялхуçалăхĕнчи пур ĕçре те хастарлăн ĕçлекенсем пулса тăраççĕ. Пирĕн колхозницăсен политикăллă активлăхĕ питĕ пысăккăн ўссе пырать. Вĕсене колхозсене ертсе пырас ĕçе хăюллăнрах куçарас пулать. Çакна нумайĕш районсен руководителĕсем халĕ тивĕçлипе хаклаймаççĕ-ха. Республикăра колхоз председателĕсем пулса мĕншурĕ те 40 хĕрарăм çеç ĕçлеççĕ. Колхозсенчи ĕçхĕрарăмĕсене ертсе пырас вырăна куçармалла, вĕсене ĕçре вĕрентсе пырассине вăйлатмалла.

Выльăх-чĕрлĕхе самăртмасăр, ўссе çитмесĕр пусассине тĕппипех пĕтермелле. Çак сиенлĕ йăла пирĕн хушăра халĕ те вырăн йышăннине пула, эпир çулсерен пиншер пуç выльăха усăсăр пĕтерсе пыратпăр, çакă пире выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне хăпартма чарать. Государствăна обязательство шучĕпе памалли кашни выльăха уйрăмăн самăртмалла.

Машинно-тракторнăй станцисем кăçал ик-виç хут лайăхрах ĕçлемелле. Кашни трактор, сеялка, жнейка, молотилка пĕр чарăнусăр ĕçлемелле. Трактор паркĕсем валли бензин, сĕрмелли материалсем çителĕклĕ таран хатĕрлемелле. Вăл ĕçе машинно-тракторнăй станцисен çак кунсенчех туса çитермелле.

Çуракине эпир, çĕршывăн хĕвеланăç енчи облаçĕсемпе районĕсенчи пек мар, лăпкă вырăнта туса ирттеретпĕр. Нимĕç оккупанчĕсенчен тасатнă облаçсемпе районсене пирĕн тăванла пулăшу памалла. — Нимĕç оккупанчĕсенчен хурлăх тўснĕ районсемпе облаçсене пиншер пăт вăрлăх парар, — тесе чĕнчĕ Чарыков юлташ.

Канашлу тăваллăн алă çупса ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн секретарĕ А. А. Андреев юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ, республикăри пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене кăçал пысăк çитĕнўсемпе тата пахалăхпа ĕçлеме чĕнсе çыру çырчĕ, тăванла республикăсемпе ăмăртăва тухса Чăваш АССР илнĕ обязательствăсене сўтсе явса çирĕплетрĕ.

Çуракине тухма хатĕр

(Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ВКП(б) ячĕпе тăракан колхоз председателĕн Гурьянов юлташăн сăмахĕнчен)

Сталин юлташ пире Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота, хамăрăн тăван çĕршыва ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыма чĕнчĕ. Вăл çапла каларĕ: «Пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ», терĕ.

Сталин юлташ хушнине эпир пурнăçа кĕртетпĕр, пирĕн колхоз 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ăнăçлăн пурнăçлассишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене срокчченех тултарассишĕн «Трудовик» колхозпа социализмлă ăмăртăва тухрĕ.

Иртнĕ çул пирĕн колхоз тĕштырăсене вăтам шутпа кашни гектартан 16,5 центнер туса илчĕ. Ыраш гектартан 17 центнер, сĕлĕ — 17,8 центнер илтĕмĕр. Огандеев юлташ бригади татах та пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлерĕ. Вĕсем кашни гектартан—19-шар центнер ыраш, 17,5-шер центнер сĕлĕ туса илчĕç.

Пирĕн пахча-çимĕç ăстаçи М. С. Чернов юлташ та пысăк çитĕнўсем турĕ. Вăл пур йышши пахча-çимĕçсем тĕлĕшпе те плана ирттерсе тултарчĕ, хăяр туса илес плана 3 хут ирттерсе пурнăçларĕ.

Çак çитĕнўсем хăйсем тĕллĕн пулман. Вĕсем колхозниксем нумай çул хушши хастарлăн ĕçленипе пулнă. Малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртни тата хамăрăн ĕçе тĕрĕс организациленипе тырпул тухăçлăхне çулран çул ўстерсе пыма май пачĕ.

1941 çулта пирĕн колхоз агротехника ĕçĕсене лайăх туса ирттерчĕ. Çуракине агротехника кăтартнă срoксенче ĕлкĕртсе пытăмăр. Акнă тырпула лайăх сăнаса тăтăмăр, ăна виçĕ хутчен çумларăмăр. Иртнĕ çулти çураки умĕн уйсене 3.000 лав тислĕк, 100 центнер кĕл тата 80 центнер минераллă удобрени кăлартăмăр. Кĕрпакине 5 кун хушшинче туса ирттертĕмĕр. Кĕрхи культурăсем акмалли çĕр лаптăкне 15 гектар чухлĕ пысăклатрăмăр.

Кăçалхи çуракине хатĕрленме эпир тахçанах тытăннă. Халĕ çураки умĕнхи ĕçсене пурне те туса çитертĕмĕр теме те пултаратпăр. Пирĕн вăрлăхсем çитеççĕ, вĕсене тасатнă, сортланă, машинăсемпе урапа таврашĕсене юсанă. Кўлмелли хатĕрсем пирĕн кашни лаша пуçне 2-шер комплект тивет. 48 центнер минераллă удобрени кўрсе килнĕ, уйсене кăларма 2.300 лав тислĕк хатĕрленĕ, вăл шутран 1.600 лавне уя кăларнă, 70 центнер кĕл тата 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Кашни бригадăн çуракинче ĕçлемелли план пур, ĕç вăйне халех вырнаçтарса тухнă.

Эпир кăçалхи çуракине 6 кун хушшинче туса ирттерме палăртрăмăр, кăна эпир пурнăçлатпăрах. Çакна ăнăçлăн тума халĕ лашасене канма тăратрăмăр.

Пирĕн колхоз вăрман касса хатĕрлес тата турттарас плана пурнăçларĕ. Халĕ чугунçул валли вутă турттаратпăр.

— Кунран кун тискерленсе пыракан тăшмана — Германи фашисчĕсен çарне пĕтерсе тăкма, çĕршывпа фронта мĕн кирлине пурне те туса пама эпир хатĕр, — теççĕ пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем.

Выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне вăйлăн ўстерер

(Республикăри Зоотехникăллă станцин старши научнăй работникĕ В. В. Жданов юлташ каланă сăмах).

1941 çулта республикăри зоотехникăллă станци выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ўстерес тĕлĕшпе сахал мар çитĕнўсем турĕ.

Красногорбатски ăратлă ĕнесем пирĕн пурĕ 60 пуç пулнă. Вĕсенчен 1941 çулта кашни, вăтам шутпа, 3480-шар литр сĕт панă. Уйрăм доярккăсен çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах. Задорожная доярка хăй группинчи ĕнесенчен кашнинчен, вăтам шутпа, 4022 литр сĕт суса илнĕ. Шмер, Лаврова, Никитина доярккăсен те ĕçĕсем ăнăçлă пулса пынă. Хăшпĕр ĕнесенчен татах та ытларах сĕт илнĕ. Сăмахран, «Дочка» ятлă ĕне çулталăкне 6.051 литр сĕт панă, «Дата»—5.498 литр, «Красотка» — 5.389 литр, «Жнея» —5.209 литр панă. Лайăх тăрантарса лайăх пăхсан, красногорбатски ĕнесем сĕт нумай пáраççĕ тата вĕсен сĕчĕ те хăймаллă пулать. Вăтам шутпа, пирĕн кĕтўри ĕнесен сĕтĕнче çу 4,2 процент шутланать.

Эпир хăшпĕр ĕнесене икшер хут пăрулаттарма тăрăшатпăр. Ир пăруланă ĕнене 20—30 кунран тепре чуптарсан, вăл çав çулах тата тепĕр хут пăрулаcа парать. Çапла туса пырса, эпир 1941 çулта 9 ĕнерен 10 пăру илтĕмĕр. Кун пек туни татах та ытларах сĕт суса илме май парать. Пĕрре пăруланă хыççăн тепре пăруличчен вăхăт нумай иртменнипе ĕне ытларах сĕт пама тытăнать. Пĕр çапла майпа кăна эпир кашни ĕнерен, вăтам шутпа, 60-шар литр ытларах сĕт суса илетпĕр.

Ĕнесенчен сĕт ытларах илнин сăлтавĕ кунта кăна мар-ха. Тĕп сăлтавĕ вăл —выльăх апатне лайăхлатнинче. Эпир шутласа пăхнă тăрăх çакă палăрчĕ: выльăх апатне лайăхлатнипе, выльăха кирлĕ пек лайăх пăхса пынипе кăна эпир пĕлтĕр сĕт 10 процент ытларах илнĕ. Апата мĕнле лайăхлатрăмăр-ха эпир? Эпир выльăхсене сĕтеклĕ çимĕç ытларах паратăмăр—çĕрулми, кăшман т. ыт. те.

Ĕнесенчен сĕт ытларах илме тата çакă та пулăшнă: эпир ĕнене хăшне хире-хирĕç пĕр пăруран тепĕр пăруччен суса пăхрăмăр. Ĕне лайăх сутарчĕ, 5000 литр ытла сĕт пачĕ. Çав ĕненех тепĕр çулхинче уйăх çурă сумасăр тăтăмăр. Çавăн хыççăн ĕне хăйĕн сĕтне 11 процента çити ўстерчĕ. Вара эпир ĕнесене пĕр вăхăта сума пăрахтарса тăма кирлине лайăх ăнлантăмăр. Анчах та сума пĕлсе пăрахтарас пулать. Мĕншĕн тесен ытлашши нумай вăхăта тăссан, ĕне сĕтне пушшех те чакарма пултарать. Эпир сăнанă тăрăх, ĕнесене шăп уйăх çурă—икĕ уйăх çурă хушши пăрахтарса тăрас пулать. Çавăн пек тусан ĕнесем пирĕн пуринчен ытла сĕт пачĕç. Çак ĕнесене вăхăтра суса вăхăтра сумасăр тăнинчен кăна эпир 6000 литр ытлашши сĕт илтĕмĕр.

Сĕт ытларах илес тĕлĕшпе эпир тата ак çакăн пек ĕç те туса ирттертĕмĕр: ĕнесем пурте пĕр пек сĕт памаççĕ. Пĕри сĕтлĕрех, тепри сĕтсĕртерех пулать. Çавăнпа та эпир пуринчен малтан сĕтлисене суйла-суйла илме тăрăшрăмăр. Эпир хăш ĕне мĕн чухлĕ сĕт панине пĕлсе тăратпăр, пăрăвне усрама хăварнă чухне амăшĕ сĕт нумай параканнине суйласа хăваратпăр. Пĕлтĕр эпир сĕт начар паракан ĕнесене чылайĕшне сутрăмăр, вĕсем вырăнне лайăх йышши йăхран çĕнĕрен пăхса ўстертĕмĕр. Пĕр çакăнтан кăна эпир 5000 литр сĕт ытлашши илтĕмĕр.

Пĕр-ик сăмах хамăрăн 1942 çулта тумалли ĕçсем çинчен. Кăçал пирĕн выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне татах та ытларах ўстермелле. Пирĕн станцире ĕçлекен работницăсемпе рабочисем кăçал çакăн пек обязательствăсем илчĕç: кашни ĕнерен иртнĕ çултинчен 100-шер литр ытларах сĕт суса илме, 10 ĕне пуçне 11 пăру илме, вĕсене пурне те лайăх пăхса усрама, колхозсене выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре пулăшу парса пыма пулчĕç. Халлĕхе пирĕн коллектив хăй тума пулнисене ăнăçлăнах туса пырать-ха. Иртнĕ уйăхра, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, эпир 10 процент ытларах сĕт илнĕ. Уйрăмăнах Задорожная доярккăн çитĕнĕвĕсем пысăк. Вăл кăçал çĕнĕ çулталпа ĕнтĕ кашни ĕне пуçне 1000-шер литр сĕт суса илчĕ.

Эпĕ сире пирĕн коллектив малашне те çапла тăрăшса ĕçлĕ тесе шантаратăп.

Çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтеретĕп

(Куславкка районĕнчи „Труд" колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕн О. Ф. Симулин юлташăн сăмахĕнчен)

Эпĕ выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ пулса сакăр çул ĕçлетĕп ĕнтĕ. Çак хушăра выльăхсене пăхма, вĕсен хисепĕпе продуктивноçне ўстерме самаях вĕренсе çитрĕм. Пирĕн колхоз 4 ферма. ĕне, сурăх, сысна тата кайăк-кĕшĕк фермисем тытать. 1941 çулта фермăсенчи пур çамрăк выльăхсене те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ўстертĕмĕр. Çавна май выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултартăмăр. Государствăна аш-какай памалли кăçалхи обязательствăна фермăсем 50 процент тултарчĕç. Халĕ татах виçĕ сыснана самăртма тăратнă.

Фермăсенче зоотехникăпа ветеринари кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыратпăр. Выльăх-чĕрлĕхе пăхса çитĕнтерессипе тата унран тупăш илесси çинчен тăтăшах каласусем ирттеретĕп. Кашни работник хăйĕн ĕçне юратса тăвать. 1941 çулта эпир выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне, 1940 çултипе танлаштарсан, сĕт суса илес енĕпе 10 процент, çăм илес енĕпе 6 процент ўстертĕмĕр. Кăçалхи çул татах та лайăхрах ĕçлессишĕн фермăри работниксем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Кăçал та эпĕ çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех пăхса çитĕнтерме, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне иртнĕ çултисенчен темиçе хут ўстерме пулатăп.

Суракине хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сўтсе-явнă хыççăн районри чылай колхозсем çуракине кал-каллăнрах хатĕрленме тытăнчĕç. Ишелькассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуракинче акмалли вăрлăхсене хатĕрлесе хучĕ. 3 тонна фосфорит çăнăхĕ, 3 тонна сульфат-аммони турттарса килчĕ, 12 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 26 центнер кĕл, 3,5 центнер фекали пухса хатĕрлерĕ тата уя 115 центнер тислĕк кăларчĕ. Колхозниксене агротехникăна вĕрентме кружок организациленĕ. Çуракине кĕске срокра ăнăçлăн ирттерес тесе лашасене аван пăхаççĕ. Вĕсене вăйлă апат çине тăратнă.

М. СТЕПАНОВА.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 30-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӗвӗн вӗçӗ

ланас умӗн 200 çын пулнӑ. Ӑна икӗ хутчен çынсем хушса пачӗç. Халӗ вара пӗтӗм ротине те 60 çын кӑна юлнӑ, вӑл шутра 10 çын вӑйлӑн тӑм илнӗскерсем. Гриппа варвитти чирӗсем аплӑн сарӑлса кайнӑ. Чирленӗ салтаксене пулӑшас тӗлӗшпе врачсем нимӗн тума та пултараймаççӗ. Врач кама та пулин госпитале яма кирлӗ тесе шутласан та, вӑл çав ыйтӑва хӑй татса пама пултараймасть. Çак ыйтӑва командир кӑна татса пама пултарать. Командир вара чирлисемпе йӑнса пӑсӑлнисене госпитале яма килӗшмест, вӑл вӗсене пурне те стройрах хӑварать, мӗншӗн тесен ротӑсенче çынсем çитмеççӗ».

* * *

Аялараххра вилнӗ нимӗçсен 7-мӗш танковӑй дивизийӗн 7-мӗш танковӑй отрядӗнчи 3-мӗш ротӑри вилнӗ ефрейторӑн Эдуард Клорӑн дневникӗнчен илнӗ уйрӑм сыпӑксене пичетлетпӗр.

«1942 çулти январӗн 18-мӗш. Пирӗн рота пысӑк çухатусем тӳсрӗ. Рота юлашкийӗсене Лядмен командирӑн ротине куçарчӗç. Вырӑссем пире ялта атакӑлаççӗ. Танксем çине вут хыптаракан шӗвек тултарнӑ бутылкӑсем вӑркӑнаççӗ. Манӑн танк çунать. Темле телее пула танкран çӑлӑнса тухрӑм.

Январӗн 28-мӗш. Каллех вырӑссен атаки. Пирӗнне 9 салтак вӗлерчӗç, 4 танка çӗмӗрчӗç.

Февралӗн 15-мӗш. Вырӑссене хирӗç контратака тӑватпӑр. Анӑçлӑ пулмарӗ. Пехота пысӑк çухатусем тӳсрӗ. Бауэр лейтенантпа Вольф фельдфебелӗн танкӗсем пӗтрӗç. Пирӗннисене 15 танкиста вӗлерчӗç, 4-шне амантрӗç.

Февралӗн 18-мӗш. Майкнер машини мина çине пырса кӗнӗ.

Февралӗн 19-мӗш. Вырӑссем яла вичӗ танкпа атакӑлаççӗ».

* * *

Смоленск облаçӗнчи Печенкино ялне йышӑнса тӑнӑ хушӑра нимӗçсен фашистла оккупанчӗсем ялти мӗнпур хресченсене çаратса тухнӑ, вӗсем мӗнпур выльӑх-чӗрлӗхе, тырпула, ӑшӑ тумтирсене тата килти япаласене туртса илнӗ. Персе пӑрахассипе хӑратса, гитлеровецсем ялти халӑха окопсемпе траншейӑсем чавтарасшӑн пулнӑ. Ӗçе тухма килӗшменшӗн нимӗçсем П. В. Трошин, И. Е. Егоров, Н. П. Поляков, И. А. Салоник тата В. А. Орехов хресченсене персе пӑрахнӑ.

Ялтан тухса кайнӑ чухне нимӗçсем 68 çурта çунтарса янӑ тата ирӗксӗрлесе хӑйсемпе пӗрле ялти 300 çынна илсе кайнӑ.

Попов отделенийӗ нимӗçсенне 14 оруди тытса илнӗ

КАНТАР-ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧЕ, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Халӑх пурӑнакан пӗр пунктран тухса тарнӑ чухне нимӗçсем хӑйсен 14 орудине [illegible]

[illegible] Кӗрӗк командирӗ Григорий Попов [illegible]

вайса пырса, автоматчиксен ротине çисӗмле атакӑланӑ. Хӑвӑрт пулса иртнӗ, анчах питех те хаяр çапӑçура, те[illegible]

Совет артиллерисчӗсем—фашистсемшӗн аса та çисӗм

КАЛИНИН ФРОНЧЕ, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Совет артиллеристӗсем, пехотӑн наступленине хӳтӗлесе [illegible] пырса тата яланах унпала пӗрле килӗшӳллӗн ӗçлесе, хӑйсен орудийӗсен вучӗпе нимӗçсен тӗреклетнӗ пункчӗсене, хирӗç тӑмалли вырӑнӗсене тата чӗрӗ вӑйне татти-сыпписӗр çӗмӗреççӗ.

Пӗр пунктра гитлеровецсем пирӗн артиллери позицийӗсем çине контратака туса кӗме хӑтланса пӑхрӗç. Вӗсем совет артиллерисчӗсене хирӗç пехотӑн пӗр пысӑк отрядне тата 8 танк кӑртсе ячӗç. Батарея комиссарӗ политрук Кильбург, хӑйӗн пӗр орудине тем таршӑш юр тӑрӑх мала туртса кӑларса лартрӗ те, тӳрремӗнех тӗллесе персе, нимӗçсен пӗр йывӑр тата тепӗр вӑтам танкне пӗтерсе тӑкрӗ. Ыттисем хӑвӑртрах каялла çаврӑнса кайрӗç. Фашист[illegible]сен контратакине пирӗн артиллеристсем çапла [illegible] сирсе пӑрахрӗç.

Старши лейтенантӑн Морозовӑн батарейи пӗр кун хушшинче тӑшман пулемечӗсен 4 точкине тата автоматчиксем кӗрсе ларнӑ 5 пӳрте аркатса тӑкнӑ. Данилов лейтенантӑн батарейи хӑй орудийӗсен вучӗпе тӑшман пулемечӗсен виçӗ точкине тата тепӗр наблюдательнӑй пункта пусарса лартрӗ, темиçе вунӑ гитлеровеца вӗлерсе пӗтерчӗ. Унӑн батарейинче уйрӑмӑнах Трифонов наводчик хӑйне лайӑх палӑртнӑ. Вӑл, фашистсен çилтӑвӑллӑ вучӗ тӑкӑннине пӑхмасӑрах, орудие уçӑ позицие кӑларса лартнӑ та, тӳрремӗнех тӗллесе персе, тӑшманӑн икӗ огневой точкине çӗмӗрнӗ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Нимӗçсем тытса илнӗ Таганрогра мӗн пулса иртет

КАНТАР ФРОНЧЕ, мартӑн 27-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Çак кунсенче Таганрог çыннисем темиçен фашистсен тыткӑнӗнчен тарса фронт линийӗ урлӑ каçнӑ. Вӗсемпе пӗрле нимӗç салтакӗ Фридрих Питтнер та килнӗ. Вӑл хӑй ирӗкӗпех тыткӑна парӑнас тесе, Таганрог çыннисем çумне хутшӑннӑ мӗн. Таганрог çыннисем пирӗн боецсемпе командирсене гитлеровецсен Таганрогри ӗçӗсем çинчен каласа панӑ. Тискер ӗçсем. Вӗсем çинчен итленӗ чух пирӗн боецсен чунӗсем çӳçенсе тӑнӑ.

Нимӗçсем Таганрогра тӗрме туса хунӑ, вӑл халь хула пек мар, çӑва пек курӑнать. Куллен урам тӑрӑх çынсене аллисене çыхса, асаплантарма гестапона илсе кайнине курма пулать. Хула тулашӗнче куллен фашистсем персе пӑрахнӑ çынсен виллисене курма пулать. Таганрог çыннисене темиçе тиньӗшне, çав шутрах старикӗсене, карчӑксене, пӗчӗк ачасене те, фашистсем пере-пере пӑрахнӑ. Хула халӑхӗ çаптерри хисеплевӗ Зак тухтӑра, Ванновский актера тата унӑн арӑмне—Горская актрисӑна, «Красный котельщик» заводӑн цех начальникне—Борисенко юлташа, культура паркӗн директорне Сопникова, Липкович адвоката, заготзерно управляющине Кузнецова, кӗреке çыхакан фабрика директорне Паницлюка—кама-кама кӑна персе вӗлермен-ши ӗнтӗ фашистсем! Урамра виççӗн тӑватӑн пӗрле пынине курсанах фашистсем хӑраса ӳксе пеме тытӑнаççӗ. «Юлташ» тесе каланӑ сӑмахшӑнах гитлеровецсем тапкаласа ывӑтма хатӗр.

Нимӗçсем, çавӑн пекех, хула çывӑхӗнчи ялсенче те тӳсме çук ашкӑнаççӗ. Платово ялӗнче вӗсем 300 çынна персе вӗлернӗ, Боково ялӗ çывӑхӗнче фашистсен машини мина çине пырса перӗннӗ—çав вырӑнта гитлеровецсем 20 çынна персе пӑрахнӑ. Мариупольре вӗсем 253 çынна персе вӗлернӗ.

Нимӗçсем тытса илнӗ вырӑнсенче йынӑшу та ахлату сасси кӑна илтӗнсе тӑрать.

Нимӗç те, итальянецӗ те, полицийӗ те,—кашни çаратма кӑна пӑхать. Нимӗç салтакӗсем колхозниксен выльӑхӗсене çаратса тухаççӗ те, пусса, какайне калама çук хаклӑ хакпа хӑйсенех сутаççӗ.

Вырӑс культурипе, вырӑс халӑхӗн историйӗпе çыхӑннӑ япаласене фашистсем пурне те пӗтерме тӑрӑшаççӗ. Вӗсем илемлӗ паркри йывӑççене, Петр I вӑхӑтӗнчех лартнӑскерсене, пӗтӗмпех касса тураса тӑкнӑ. Паркран халӗ фашистсем хӑйсен вӑрӗ-турахӗсене пытармалли çӑва туса хунӑ. Чехов музейӗнче Чеховӑн алçырӑвӗсем тата Толстой, Горький писательсем хӑйсем аллипе çырсах халаласа панӑ кӗнекесем пулнӑ. Çав музее фашистсем пӗтӗмпех çаратса тухнӑ. Чехов пурӑнакан çуртра та нимӗн те хӑварман, Чеховӑн бюстне çапса ватнӑ. Шкулсенчен лаша витисем туса хунӑ, партӑсене вутта тураса хутса янӑ. Хулан кашни урамӗнчех, кашни кӗтессинчех хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсем валли публичнӑй çуртсем уçнӑ.

Анчах çапла пулсан та Таганрог халӑхӗ пуçне усмасть, тӑшмана парӑнмасть. Вӗсем чӑтаççӗ-ха, паттӑр Хӗрлӗ Çар хӑйсене ирӗке кӑларасса куç пек кӗтеççӗ. Вӗсем пӗр самантлӑха та тӑшмана канӑç памаççӗ, вӗсем оккупантсене хирӗç татӑклӑ кӗрешӗве хатӗрленеççӗ.

В. СОБОЛЕВ.

Нимӗç самолечӗсем Мускав çине вӗçсе килсе тапӑнни

Мартӑн 29-мӗшӗнче каçхине нимӗç самолечӗсен ушкӑнӗ Мускав çине вӗçсе килсе тапӑнма хӑтланнӑ. Зенитнӑй батарейӑсенчен [illegible] тата пирӗн истребительсен çапӑçнипе тӑшманӑн самолечӗсене хула патне пынӑ чухнех сапаласа янӑ, вара вӗсем каялла çаврӑнса кайнӑ. Фашистсен 3 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Хула районне нимӗçсен 1—2 самолечӗ вӗçсе кӗнӗ, вӗсем пурӑнакан çуртсем çине тӗллемесӗр-таллисӗр бомбӑсем пӑрахнӑ. Вилнисемпе аманнисем пур.

Куйбышев хулине Югославин ССР Союзӗнчи посланникӗ С. Симич господин çитни

Мартӑн 27-мӗшӗнче Куйбышев хулине Югославин ССР Союзӗнчи чрезвычайнӑй посланникӗ тата полномочнӑй министрӗ С. Симич господин çитнӗ.

Куйбышеври аэродром çинче С. Симич господина Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарначӗн Протокольнӑй отделӗн заведующин заместителӗ П. А. Бушуев юлташ, Югославин ССР Союзӗнчи ӗçӗсен повереннӑйӗ Д. Богич господин ертсе пынипе Югославин миссийӗ, çавӑн пекех тата Греци посланникӗ П. Пипинелис господин кӗтсе илнӗ.

ПАТТӐР ПАРТИЗАНСЕМПЕ КОЛХОЗНИКСЕН ДЕЛЕГАЧӖСЕМ ЛЕНИНГРАД ÇУЛӖ ÇИНЧЕ

ТИХВИН, мартӑн 29-мӗш. (ТАСС). Нимӗçсен тылӗнчи партизансемпе колхозниксен делегацийӗ Ленинграда çул тытать.

Боровичи хулин ӗççыннисем вӗсене ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илнӗ. Передски ялсоветне кӗрекен колхозниксем делегаци килсе çитиччен темиçе кун малтан çав тытса илнӗ районсенчи партизансемпе колхозниксем Ленинград валли организацилленӗ хӗрлӗ обоза пӗрле парнесем парса яма, хӗрлӗ обоза çӗнӗ лавсемпе пысӑклатма Боровичи районӗнчи пур ӗççыннисене те чӗнсе пулнӑ. Çав чӗнӳ пур колхозниксене те хавхалантарнӑ.

Боровичи хулинче, площадьре пысӑк митинг пулса иртнӗ. Митингра сӑмах пуçланӑ чух малтан П. юлташа, партизансен группин руководительне, панӑ. Вӑл Ленинград облаçӗнчи партизансен боевой ӗçӗсем çинчен каласа панӑ.

Çамрӑк партизанка Дуня О. тухса сӑмах каланӑ. Нимӗçсем унӑн çуртне вут тивертсе çунтарса янӑ, унӑн чи çывӑх тӑванӗсене асаплантарса вӗлернӗ. Çамрӑк партизанкӑн сӑмахӗсем вут пек вӗри тухнӑ, унта нимӗç захватчикӗсене çавтери курайманни çиçсе тӑнӑ.

— Ман атте, — тенӗ вӑл,—нимӗç вӑрӑ-хурахӗсене хирӗç çапӑçса вилчӗ. Анчах та унӑн хӗрӗ, эпӗ, сывах-ха. Эпӗ аттене тавӑрӑп. Манӑн аллӑм чӗтӗрес çук. Эпӗ пӗр патрон юлмиччен, пӗр тумлам юнӑм юлмиччен тӑшмана хирӗç çапӑçӑп.

Митинг вӗçленнӗ. Площадьре халӑхӑн паттӑр ывӑлӗ-хӗрӗсен ячӗпе, аслӑ Сталин ячӗпе саламсем каланни илтӗнсе тӑнӑ. «Урра» кӑшкӑрни янӑранӑ.

Боровичи колхозникӗсем çав паллӑран та паллӑ кун Ленинград валли çӗр лав ытла продовольстви парса янӑ. Партизансемпе колхозниксен делегацийӗ малалла çул тытать. Кашни яла çитмессерен вӗсен обозӗ ӳсет, пысӑкланса пырать, кашни ялтах вӗсен çумне çӗнӗ лавсем хутшӑнаççӗ.

ХӖРЛӖ ÇАРӐН БОЕЦӖСЕНЕ— МАЙ УЯВӖН КУЧЧЕНЕÇӖСЕМ

ХУСАН, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС). Тутар республикинчи ӗçҫыннисем [illegible]

[illegible]

[illegible] пенсионерка, анчах та производствӑна [illegible] йышӑннӑ.

Колхозсем боецсене пулӑшаççӗ

КУКЕÇ. (Телефон тӑрӑх). Шупашкар районӗнчи колхозсем геройла Хӗрлӗ Çарӑн аманнӑ боецӗсем патне ӗçме-çимелли кучченеç ярас ӗçе хастарлӑн пуçарса ячӗç. Çак кунсенче Иккассинчи «Майӑн 1-мӗш» колхоз 50 килограмм аш тиетсе хунӑ. Чулкассинчи «Çӑлтӑр» колхоз 10 чӑх, 80 çӑмарта пама уйӑрса хунӑ, 8 мӑшӑр носки хатӗрленӗ тата райсоюз урлӑ тӗрлӗрен ӗçме-çимеллисем илсе пама 632 тенкӗ укçа пуçтарнӑ. Çавӑн пекех «Кочаковец» колхоз — 1 килограмм шӑратнӑ çу, 27 çӑмарта, «Ударник» колхоз — 15 килограмм пыл, Водопьянов ячӗпе тӑракан колхоз — 5 килограмм пыл тата 5 килограмм ӑшаланӑ аш хатӗрленӗ. Районри служащисем 2.500 тенкӗ укçа пуçтарнӑ. Пухнӑ укçапа райсоюз урлӑ паха продуктсем илсе параççӗ. **Т. ЛОГИНОВ.**

Отличниксем комсомола кӗреççӗ

Нуски чаçӗн вӗренӳ подразделенийӗнчи комсомол организацине кунран кун çӗнӗ курсантсем хутшӑнаççӗ. Курсантсем фронта каяччен комсомола илме ыйтса заявленисем параççӗ. Акӑ мӗн çырать курсант Селезнев юлташ хӑйӗн заявленийӗнче: «Комсомолецсем отечественнӑй аслӑ вӑрçӑн фронтӗнче малти ретре тӑрса çапӑçаççӗ. Эпӗ те фронта комсомол билечӗпе каясшӑн. Хамӑн мӗнпур вӑя, мӗнпур пӗлӗве тӑван çӗршывшӑн парса, фронтра юлашки тумлам юн юлмиччен çапӑçатӑп». Çакнашкал заявленисем вӗренӳ подразделенийӗнчи комсомол организацине вуншарӑн параççӗ. Курсантсем комсомол ретне кӗрсе хӑйсен активлӑхне ӳстереççӗ. Нумаях пулмасть комсомола кӗнӗ курсант М. Чеснюков юлташ çар ӗçне тӑрӑшса вӗренет. Петров, Хабанов курсантсем те вӗренӳре лайӑх ӗлкӗрсе пыраççӗ.

Курсант **Н. ЦВЕТКОВ.**

Действующи арми.

Куллен кирлӗ таварсем пирки

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче ӗççыннисем валли куллен кирлӗ таварсемпе çимелли япаласем туса кӑларассине пӗрмаях ӳстерсе пымалла. Анчах та хӑшпӗр руководительсем çакна тӗрӗс ӑнланмаççӗ, куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас тӗлӗшпе сӳрӗккӗн ӗçлеççӗ.

Канашри аш-какай комбиначӗнче супӑнь туса кӑларасси çинчен калаçма пуçланнӑранпа 3 уйӑх иртрӗ ӗнтӗ. Унта супӑнь туса кӑларма чӗртаварсемпе кадрсем çителӗклех, оборудованисем те тупма пулать. Çавӑнпа кунта супӑнь тӑвакан уйрӑм цех уçма май пур. Вӑл цех, комбинат директорӗ Баранов юлташ каланӑ тӑрӑх, çулталӑкра 25—30 тонна хуçалӑхра усӑ курмалли супӑнь тата 5—6 тонна шӗвек супӑнь туса кӑларма пултарать.

Пысӑк та усӑллӑ ӗç. Анчах комбинат руководстви пуçарусӑр ӗçленине пула, çак усӑллӑ ӗçе халӗ те тивӗçлипе тытӑнман-ха.

Выльӑх пусакан хӑшпӗр пункчсенче выльӑхсен юнне пачах илсе юлмаççӗ. Çавна пула çулталӑкра 70—80 тонна юн усӑсӑр пӗтет. Юнран çилӗм тума е сивӗтнӗ юна выльӑх самӑрталакансене сутма пулать. Çапах та, çакна пӗле-тӑркачах ку енӗпе нимӗн те тумаççӗ.

Кунсӑр пуçне унта колбаса цехӗн юлашкийӗсенчен — шӑмӑсемпе мӑйракасенчен тӳмесем, турасем тӑвассине организацилеме пулать. Апла пулин те Баранов юлташ ку ӗçсене хальтерех пуçарса яма хатӗрленмест-ха; кадрсем çитмеççӗ, тесе хӑйне-хӑй ӑйапатса пурӑнать.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çирӗплетнӗ план тӑрӑх, Канаш районӗнче кӑçал ӗççыннисене куллен кирлӗ таварсемпе çимелли япаласем пурӗ 5.941.560 тенкӗлӗх туса кӑлармалла. Çак ӗç валли çӗнӗрен 3 мастерской, 2 цех уçмалла. Вӑл шутран икӗ мастерскойӗ—райпромкомбинат çумӗнчи атӑ-пушмак юсакан мастерскойпа «Авангард» промартель çумӗнчи сӑран тӑвакан мастерской—март уйӑхӗнче ӗçе кӗмеллеччӗ. Март уйӑхӗн юлашки кунӗсем те çитрӗç, асӑннӑ мастерскойсем çаплипех ӗçе кӗме хатӗр мар-ха.

Райпромкомбинат (директорӗ Захватов юлташ) 1942 çулта тӑмран чашӑк-чӳлмексем чылай туса кӑларма палӑртнӑ. Чашӑк-чӳлмексем туса кӑларма халӗ иртерех-ха, тейӗпӗр, анчах ӗç вырӑнӗпе кадрсене хатӗрлеме вӑхӑт çитнӗ.

Партин XVIII конференцийӗ ячӗпе тӑракан промартель иртнӗ çул производство планне 95,2 процент кӑна пурнӑçланӑ, кӑçал та ӗçсем чаплах мар. Артель правленин председателӗ Шемяков юлташ артель начар ӗçленине кадрсем çитменнипе ӑнлантарса пама пӑхать.

Чӑнахах та промартельсенчи квалификациллӗ рабочисен пӗр пайӗ Хӗрлӗ Çара кайрӗ. Анчах ӗççыннисене куллен кирлӗ таварсене туса кӑларас плана пултарманни, тӗпрен илсен, унтан килмен. Çара кайнӑ юлташсем вырӑнне хӗрарӑмсенчен кадрсем хатӗрлемелле пулнӑ.

Куллен кирлӗ таварсемпе çимелли япаласене ӗççыннисем валли çителӗклӗ тӑранах туса кӑлармалла. Ӗççынни депутачӗсен Канаш райсовет исполкомӗпе парти райкомӗн куллен кирлӗ таварсемпе çимелли япаласем туса кӑларас ӗçри çитменлӗхсене халех пӗтермелле, ку ӗçе оперативно ертсе пымалла.

П. НИКОЛАЕВ.

КАНАШ («Чӑваш Коммуни» корр.).

Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçӑ

(Мартӑн 26-мӗшпе 28-мӗш хушшинчи телеграммӑсене пӑхса тухни)

Бирмӑра Тоунгу хули районӗнче юлашки темиçе кун хушшинче вӑйлӑ çапӑçусем пыраççӗ, вӑйсӑрӗ-вӑхӑчӗпе вӗсем хаярланса каяççӗ. Япони командованийӗ фронтӑн çак участокне вӑй нумай пухса тӑратнӑ тата çӗнӗрен подкрепленисем илсе-илсе пырать.

Фронтӑн çак участокне, çав шутра Тоунгу хулине те, хӳтӗлессин тӗп йывӑрлӑхне китаецсен Бирмӑри войскисем çине хунӑ. Хальхи вӑхӑтра Тоунгу хулин районӗнче лару-тӑру хӑрушӑ пулса тӑнӑ.

Тоунгу хулин районӗнче хӗссе пынине вӑйсӑрлатас тесе, китаецсем Бирмӑна Тали хушшинчи чиккӗн çурçӗр участокӗнче чикӗ урлӑ каçнӑ та Таи территорийӗ çине наступлени туса пыраççӗ. Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçӑ пуçланнӑ чухне японецсем хӑйсен вӑрçӑ ӗçӗсене çав территори çинчен пуçласа янӑ. Моулмейнран çурçӗререхри районра китаецсен чаçӗсем Таи войскисемпе пӗрремӗш хут тытӑçса илнӗ. Таи войскисене Японии офицерӗсем ертсе пыраççӗ.

Филиппин çинче вӑрçӑ ӗçӗсем çӗнӗрен çивӗчленсе кайнӑ. Çапӑçусем Лусон, Минданао т. ыт. утравсен тӗрлӗ районӗсенче пыраççӗ. Чи вӑйлӑ çапӑçусем Батаан çурутравӗ çинче (Манила заливӗн çурçӗр çыранӗ хӗррине) пуçланса кайнӑ. Çав вӑхӑтрах Японии авиацийӗ пысӑкках мар Корригидор утравӗ çине бомбӑсем вӑйлӑн пӑрахать, çав ут[illegible]

[illegible]

[illegible] пайӗнчи Андаман утравӗсем çине Японийӑ десант антарнӑ. Çав утравсем вӗсем Бирма çыранӗсенчен кӑнтӑрарах 300 мильӑра лараççӗ, вӗсем стратеги тӗлӗшӗнчен пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. (ТАСС).

Англине Германи хушшинчи сывлӑшри вӑрçӑ

ЛОНДОН, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС). Авиаци министерстви кӑларнӑ коммюникере çапла каланӑ: мартӑн 27-мӗшӗнче кӑнтӑрла Англин бомбардировщикӗсем, вӗсене йышлӑ истребительсем хӳтӗлесе пынипе, Остендери объектсене атакӑланӑ.

Мартӑн 27-мӗшӗнче кӑнтӑрла противникӑн темиçе самолечӗ Англин кӑнтӑр-хӗвеланӑç пайӗнчи çыранӗсенче икӗ пункт çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Çав пунктсенчен пӗрин çине çавӑн пекех тата пулеметсенчен пенӗ. Пӗр çынна кӑштах амантнӑ.

Сывлӑшран пырса тапӑннӑ пирки Венӑра тревога пулнӑ

ЛОНДОН, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Бернран пӗлтернӗ тӑрӑх, мартӑн 27-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Австри çинче Англин самолечӗсем вӗçсе çӳренӗ. Венӑра сывлӑшран тапӑнасран сыхланма тревога туни çинчен пӗлтернӗ.

Англичансем Сен-Назер базине рейд тунӑ

ЛОНДОН, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС). Лондонра комбинированнӑй операцисен штабӗ коммюнике пичетлесе кӑларнӑ. Коммюникере çапла каланӑ: мартӑн 28-мӗшӗнче тул çутӑлас умӗн виçӗ тӗрлӗ войсковой чаçсен комбинированнӑй операцийӗсем пулса иртнӗ. Çав операци вӑл—Сен-Назер çине пӗчӗкрех масштаблӑ рейд туса илни пулать. Тӗплӗн пӗлтерекен коммюнике каярахпа, войскӑсем операцирсн таврӑнсан, пичетленсе тухать.

Англин информаци министерстви çакна кӑтартса парать: французсен Сен-Назер тинӗс бази Луара юхан шывӗн вӑррине ларать, Англи порчӗсенчен унта 350 миля пулать.

Çакӑ паллӑ, Сен-Назера нимӗçсем подводнӑй лодкӑсен бази туса хунӑ. Атлантика çыранӗсенче Сен-Назер çавӑн пек базӑсенчен чи пысӑк база пулса тӑрать.

Ганди Криппспа тӗл пулни

ЛОНДОН, мартӑн 28-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Делирен пӗлтернӗ тӑрӑх, Ганди Криппспа каласнӑ. Калаçу икӗ сехет ытла пынӑ.

Корреспондент çакӑн çумне хушса çапла пӗлтерет: Гандирен вӗсем Криппспа иккӗшӗ мӗнле проблемӑсем сӳтсе явни çинчен ыйтсан, вӑл ку ыйту çине ответ памасӑрах хӑварнӑ.

Марсель Деана çӗнӗрен вӗлерме тапӑннӑ

ЖЕНЕВА. (ТАСС). Парижран çапла пӗлтереççӗ: Францин оккупацилленӗ зонинче пурӑнакан гитлерла агента — Марсель Деана мартӑн 26-мӗшӗнче çӗнӗрен вӗлерме тапӑннӑ. Деа Парижри театрӑн пӗр залӗнче сӑмах тухса каланӑ, çав вӑхӑтра ун çине бомба пӑрахнӑ. Бомба Деа ури çинех ӳкнӗ, анчах çурӑлман.

Деа Франци халӑхне сутакансенчен чи паллӑраххисенчен пӗри. Пӗлтӗр, август уйӑхӗнче, Версальре «большевиксене хирӗçле легионри добровольцсен» парачӗ пулнӑ чухне пӗррe ун çине Франци патриочӗ çамрӑк Поль Коллет револьвертан пенӗ те пулнӑ ӗнтӗ. Ун чухне Деа Лавальпе пӗрле йывӑрах аманнӑ пулнӑ.

Ютçӗршывсенче

● Парижри полици «коммунистла агитаци» тунӑшӑн айӑпласа 13 çынна арестлени çинчен пӗлтернӗ. Парижра икӗ француз-матроса асаплантарса вӗлерме, 11 çынна нумай вӑхӑтлӑха тӗрмене хупмалла туса приговор йышӑннӑ.

● Мартӑн 15-мӗшӗнче, Чехословаки республикине нимӗçсем оккупацилени çулталӑк тултарнӑ кун, Прагӑра нумай çуртсем çине траурлӑ хура ялавсем кӑларса çакнӑ. Штурмовиксем ялавсене çура-çура пӑрахнӑ, нумай çынсене арестленӗ.

● Кӑнтӑр Африкӑна нимӗçсен тыткӑна лекнӗ çар çыннисене илсе пынӑ. Вӗсем хушшинче икӗ генерал: пӗри — генерал-майор Артур Шмидт, вӑл Тӗнӗл державӗсен Бардия гарнизонӗн командирӗ пулнӑ, тепри — генерал фон Равенштейн, вӑл Ливири тӗнӗл держависен бронетанковӑй дивизин командирӗ пулнӑ.

● [illegible] закон тӑрӑх Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Колумбие тата Венесуэлӑна, вӗсене 30—45 миллион долларлӑх çар материалӗсем пама [illegible]

● [illegible]

● Индири Калькутта хулинче сывлӑшран тапӑнассинчен сыхланас майпа чи малтанхи хут вӗренӳлле тревога туса ирттернӗ. Сывлӑшран тапӑннинчен пулма пултаракан сиенсемпе кӗрешмешкӗн хулара командӑсем тунӑ. Çав командӑсем 20.000 çынран тӑраççӗ. Хулара çавӑн пекех бомбоубежищӗсем тӑваççӗ, пушарсем сӳнтернӗ çӗрте усӑ курма 2000 çӑл алтаççӗ.

● Австралире хӗçпӑшаллӑ вӑйсен кадрӗнче тата запасра тӑман арçынсене, 16 çултан пуçласа 60 çула çитиччен хисене, пурне те национальнӑй повинноçа пурнӑçа кӗртес ӗçе хутшӑнтарас майпа, сывлӑшран тапӑннинчен сыхланмалли отрядсенче службӑра тӑма хушнӑ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

▲ Смоленск облаçӗнчи Полотняный заводри рабочисемпе специалистсем фашистла захватчиксем çӗмӗрсе пӗтернӗ предприятисене юсаса ӗçе ярас тӗлӗшпе ырми-канми ӗçлеççӗ.

Апрель уйӑхӗн пуçламӗшӗнче хут фабрикисем пурте ӗçлеме пуçлаççӗ. Майӑн 1-мӗш тӗлне çав фабрикӑсем тӑван çӗршыва пуçласа çӗршер тонна хут параççӗ.

▲ Горький облаçӗнче 13 районри пищекомбинатсенче хуçалӑхра кирлӗ супӑнь туса кӑларакан цехсем организацилеççӗ.

▲ Кемерово хулинчи промкомбинат шӑл порошокӗ тӑвакан завод лартнӑ. Çак çулта завод мӗнпурӗ çур миллион ытла пакет шӑл порошокӗ туса кӑларать.

▲ Аслӑ физик тата астроном Галилей вилнӗренпе 300 çул тултарать. Галилей — хальхи наукӑна пуçласа яракан улӑпсенчен пӗри пулать. ССР Союзӗн Наукӑсен Академийӗ çав куна палӑртса чаплӑ лару туса ирттерет. Ларура Галилей çинчен научнӑй докладсем вуласа параççӗ.

Фронтри боецсенчен килнӗ çыру

Нумаях пулмасть Шӑхасан вӑтам шкулӗнче 8-мӗш «А» класра вӗренекен ачасем нимӗç вӑрӑ-хурахӗсене хирӗç паттӑррӑн кӗрешекен боецсенчен çыру илчӗç. Вӗсем çырура ачасене посылка ярса панӑшӑн тав тӑваççӗ. Шкулта «хорошо», «отлично» паллӑсемпе вӗренсе пынӑ хушӑрах, колхозсене, фронта татах та ытларах пулӑшса пыма чӗнеççӗ. Ачасем, боецсен чӗнӗвне ырласа, вӗсем патне татах тепӗр посылка ярса пама кӑмӑл турӗç. Кунпа пӗрлех хӑйсен ӗçӗсем çинчен çыру çырса яма йышӑнчӗç.

Хальхи вӑхӑтра ачасем шкулта агротехникӑна вӗренеççӗ. Вӗсем пурте çуракинче хутшӑнса ӗçлеме ӗмӗтленеççӗ.

А. ОРЛОВ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑç пайӗн — 5—31, ялхуçалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин çулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑç пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1033 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 54 п: м: